У1-261

Ухсай Яккăвĕ

3/99



# ТУТИМĔР

Чăвашгосиздат · 1941

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
КОНТРОЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

УХСАЙ ЯККĂВĔ

# ТУТИМĔР

ПИЛĔК АКТЛĂ
ТРАГЕДИ

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1941

*„Чăваш ялĕсенче турчă-
касемпе сенĕксем тата
тимĕр-тăмăр япаласем
сутма чарас“.*

*(Пĕррemĕш Петр патша
указĕнчен).*

## ВЫЛЯКАНСЕМ:

**Тутимĕр.**
**Чемей.**
**Асамат.**
**Курак.**
**Эрпике.**
**Галахов.**
**Полина.**
**Офицер.**
**Иван.**
**Тяпук.**
**Ӳсĕр ҫын.**
**Евчĕсем.**
**Салтаксем.**
**Вăйăри ҫамрăксем.**
**Халăх.**

Трагедире кăтартнисем XVIII-мĕш ĕмĕрĕн юлашки сыпăкĕнче Пушкăрт ҫĕршывĕнчи чăвашсем хушшинче пулса иртеҫҫĕ.

# ПЁРРЕМЁШ АКТ

Асаматăн хура пўрчĕ. Тĕпелте те, алăк патĕнче те саксем. Кăнтăрла. Курак кĕрĕ илсе ларать.

## I

Курак

Паян каçпа килет-ши евчĕ?
Кĕтсе шăп иртрĕ пĕр эрне.
Çапах та çук. Элек таврашĕ,
Хура кушак пек, çул çинчен
Иртмерĕ пулĕ, хăямат.

Эрпике сасси

Анне! Анне! Чĕппе тытса
Каятчĕ хурчăка. Инкекĕ
Каймасть, пĕр майăн явăнать.
Кăшша!

Курак

Ан çухăр, Эрпике!
(*Хăй тĕллĕн, шăппăн*).
Тытса каймарĕ хурчăки.

Ку ырра мар. Ватти сăмахĕ
Каларĕшле, кăçал хĕре
Нимле те вĕçереймĕп эпĕ.
Пĕр-пĕр чун мурĕ хурчăка
Чĕппе тытсан, вĕри ăшчикĕм
Лăпланнă пулĕччĕ. Эх, турă,
Итле йӳтенĕ чуруна,
Качча пама та пысăк хулăм
Илме антăрччĕ çăмăллăх!
Чĕнсе кӳртем-ха. Хурчăки
Пĕр чĕппине тытса тен кайĕ.

(*Кăшкăрса*)

Хураллаcа ыратăн пулĕ,
Кансан та юрĕ, Эрпике!

Эрпике сасси

Типме кăларнă ыраша
Сăхаççĕ çерçисем. Кăшша!

Курак

Пĕрре те итлеместĕн-çке.
Кĕме калана. Ан лăрка!

Эрпике сасси

Атте килет.

Курак

Эппин шыв кӳр!

Апат та кирлĕ кăнтăра.
Чĕппӳсене хамах хураллăп.

(*Килкартинче витресем янрани илтĕнет*).

Тинех тасалчĕ. Хурчăка
Тӳп-тӳрĕ антăр килкартне!
Унта пĕри, уксах шим-шимпĕ
Çӳрет, ăна тытса кайсан та,
Шеллемĕттĕм. Хĕре килтен
Ăсатайсан, чĕре асапĕ
Иртетчĕ ман.

(*Чăхсем çуйăхни илтĕнет*).

**Асамат сасси**

Кăшша! Ăръях!

Курак

Тепри, вилмен ийе путекĕ,
Хурчăкана хăратрĕ. Тьфу!
Инкек çине сикет синкекĕ.
Килмест евчи те, çĕрçăтман.

(*Асамат кĕрет*).

## II

Курак

Ытла карма çăварлă эсĕ,
Вăрра хӳтерне пек саспа
Чуна сиктертĕн.

Асамат

Ав хёрен
Йӑтса та карӗ пӗр чӗппе.
Аҫу-аннӳ пӗлсе ят панӑ:
Тӑмсай хура курак ҫав эсӗ.

Курак

Хӑшне вара, имшеррине-и?

Асамат

Арҫын пӗлет-и? Тух та-кур!

Курак

Ҫӳлти аттемӗр ҫырнинчен
Иртеймӗпӗр. Тытсан та юрӗ.
Чӗп пек каять пуль Эрпике.

Асамат

Ялан юрри пӗрре куракӑн:
Кӑранк! кӑранк! Ҫӑва ҫине
Каясчӗ сан, тӑрӑ ухмахӑн.
Пуҫу ҫатан пек шӑтӑк-шатӑк,
Ҫилсем вӗҫтернӗ миммӳне.

Курак

Чипер калаҫ-ха, Асамат!

Асамат

Пӗлтӗр тукмак пӗр пӑрӑва
Тытсан та, эсӗ савӑнтӑн,
Евче кӗтсе сӑра вӗретрӗн.

Каллех çав юрă, çав сăмах.
Суха туса тертленнĕ хыççăн
Апат çиесчĕ тутлăрах.

Курак

Уйран та çăкăр çеç. Тутли
Лере, улпут кĕрекинче.

*(Хатĕрлесе сĕтел çине лартать).*

Асамат

Кăçал юманлăх леш енче
Начар ырашăн уçăмĕ.
Ытла сайра—хушши пĕр шит.

Курак

Ăна акма кайма тухсассăн,
Кам хирĕç пулнăччĕ сана?

Асамат

Ара, кам пултăр-ха? Чемей,
Тутимĕр ашшĕ.

Курак

И, чĕлхесĕр!
Чĕлхесĕре курсан, ыраш—
Пуçахсăр, тетчĕ ман атте.

Асамат

Пĕр канăçсăр сăмах арманĕ
Ĕçлет мĕн санăн, авăрать.

Кăтра çынна çулта тĕлпулăн,—
Тырру та хĕвĕнĕ, ачам!—
Çапла калатчĕ асатте.
Чемей кăтра.

Курак

Кăтра пулсан та,
Кукши çап-çуттăн курăнать.
Хăвах куратăн, пирĕн уçăм
Лĕпки пек çап-çара.

Асамат

Кулса
Пыра ларатчĕ пĕр тĕпренчĕк.
Кăçал пÿрте сиплемелле,
Пир-авăрна хыпаланса
Пĕр ан сутсан—укçа пулатчĕ.

Курак

Пĕртен-пĕр шанчăк—Эрпике.
Укçа килетчĕ, çураççан.
Кăçал вăл нарăсра вунçиччĕ
Тултарчĕ,—вăхăчĕ кайма.
Ун пек илемлĕ хĕр-упраçшăн
Çĕр тенкĕ парĕç.

Асамат

Ых, çăвар!
Хура курак! Çаплах пĕр юрă!

Курак

Вăрçса кăлартăн тинкене.
Сана вĕт ывăл кирлĕччĕ.
Хĕре çĕр ячĕ çук. Кайсан,
Ӳпкев илтсе хăлхам янрамĕ.
Эрпикене çуратсанах,
Хĕнерĕн, калăппа çапса
Пуçа шăтартăн. Мантăн-им?

Асамат

Ватма та тивĕç пур. Çынсен
Килте—виçшер сап-сара ывăл,
Хирте—виç ят, ĕçре—улт алă.
Вилсен,кам тупăк касĕ маншăн?
Пĕр ывăл та тумарăн эсĕ.
Хĕрарăм-и? Хĕсĕр курак!

Курак

Турри хушман-тăк, айĕпĕ
Манра-и?

Асамат

Ыттисемшĕн турă
Пĕрре те хирĕç мар, Курак!

Курак

Вĕрӳçĕ патĕнче те пултăм,
Киремете те асăннă,

Чӳкне те хывнӑ ҫулленех.
Ах, турӑ, мӗншӗн чуруна
Памарӑн ывӑл? Ан ҫилен,
Каҫар мана!

*(Килкартинче чӑхсем кӑтӑклатни илтӗнет).*

Асамат

Кӑшша! Ӑръях!
Каллех те тепӗр чӗп ҫухалчӗ.
Миҫе хӗр парӑн, хӑямат!

Курак

Эрпикинне ҫӳҫ тунине
Ҫӑласчӗ! Карӗ те ҫухалчӗ.
Шыва кайсан вӑрах ҫӳреҫ-и?
Утма виҫ утӑм.

Асамат

Ҫухрӑм пур-тӑр.

Курак

Ҫӑлкуҫӗ ав!

Асамат

Ӗнертенпе
Тӗне кӗменнисем ӑсаҫҫӗ
Ял вӗҫӗнче.

Курак

Кунти типмен-и?

Асамат

Типмен. Унта Ахрумкă пуп
Тăватă чăваша тĕн кÿртнĕ.
Унтан тумлам та шыв ĕçме
Хушман тĕне кĕменсене.

Курак

Ытла йĕркесĕр тамаша.
Пире кÿртмеççĕ-и?

Асамат

Пуп килĕ,
Пĕрре хĕстерĕ—макăрăн.
Хĕрес чиксе кăларнă шывăн
Витри виç тенкĕ. Пуянсем
Тĕне кĕреççĕ, унсăрăн
Хĕстерĕ Кĕтерин патша.
Хире каяс!

Курак.

Мĕлкÿ çич утăм
Пулсан, киле васка каçкÿлĕм.
Кĕрмеслĕ ялĕнчен пĕр евчĕ
Килес пек сас-ура çÿрет.

Асамат

Лаша
Мĕн калĕ сухара...

Курак

Ан ӳкĕн,
Кĕтсе тăмасăрах çурачăп.

Асамат

Çапах та çыннине пĕлмесĕр,
Ан килĕш. Хĕрĕмĕр тăван,
Ан пултăр ĕмĕрĕ куççуллĕ.

(*Асамат каять*).

### III

Курак

Каларăн та... Хăвна пĕлесчĕ!
Мана, хĕр чух, çурачнă чух
Яка чĕлхеллĕ вата евчĕ
Мухтаннине итлерĕм эпĕ,
Пуян киле улпут майри пек
Кĕрсе, çемçе минтер çинче
Ларатăн, тенĕччĕ, анчах
Пĕркенчĕке уçсан, тиш куртăм:
Итем çинче ултшар уралла
Урпа капанĕсем пулман,
Сап-сарă мăянсем кашлатчĕç.

Туя та çыннăн тумтирне
Илсе ху пынă, тепĕр кун
Ĕнсӳ çинче чупатчĕ пыйтă.
Мана ку каччă та юрарĕ,
Хама мĕн çырнине тӳссе,
Курса хуллен-хуллен ирттертĕм.
Пуян килкартине кĕме,
Инке пулма илемлĕ марччĕ,
Тата çитменнине кура
Тĕл-тĕл кĕсенлĕччĕ пит-куçăм.
Çеçке пек Эрпике, хитре.
Такам куçне те хĕртмелле,—
Ăна парасчĕ пуяна.
Килет!

(*Чӳречерен пăхса*).

Эп те, хура курак,
Тăпра урайлă йăвара
Епле илемлĕ кăвакарчăн
Ӳстернĕ. Паттăр çав Курак!
Ун евĕр ывăлăм пулсан,
Çĕрме пуян та хăй хĕрне
Кине паратчĕ, тупата!

(*Эрпике кĕрет*).

**IV**

Э р п и к е

Чĕп амăшĕ ăçта, анне?

Курак

Пĕр хурчăка-и, е хĕрен-и
Çаклатрĕ чĕппине, анчах
Унтах пуль амăшĕ.

Эрпике

Çынсем
Каларĕç,—ăмăрткайăк
Йăтса çĕкленĕ пĕлĕте.

Курак

Ах, турă! Амăшне тытсан,
Ватти каларĕшле, мана,
Килхуçине, тивет инкекĕ.

Эрпике

Хураллăп, терĕн, хўтерсе
Кўртертĕн шыв.

Курак

Ан асăн ĕнтĕ.
Ахаль те чĕрене хускатрăн,
Чуна силлерĕн, Эрпике.
Ыйткалакан пек çĕтĕк-çурăк
Çўретĕн; урама тухсан,
Умна тевет çаксан, аванччĕ.

Эрпике

Чечен тумтир, тевет-нухрат
Çакса тухма, сĕрен уявĕ

Çитмен. Çынсем те ман пекех
Çӳреççĕ.

Курак

Эсĕ, çын тесе,
Чемей старик пек пилĕк урлă
Çĕрĕк пăяв çыхасшăн мар-и?

Эрпике

Çыхсан та, çылăх мар, анне.
Нумай пулмасть-ха, пурçăн тутăр
Çыхса çĕрле вăйя тухсан,
Шăлна çыртса сĕтел çапаттăн.
Тăр кăнтăрла, ĕç çиййнче
Тевет çакма хушатăн халĕ.
Каллех те çураçас пирки
Чĕлхӳ кĕçтет-им?

Курак

Чăн сăмахăн
Суйи çук çав, ачам. Сисетĕн
Таçтан та ырлăх килнине.

Эрпике

Ăçтан?

Курак

Кĕрмеслĕ ялĕнчен.
Каччи—йĕри-тавра мухтавлă.

Кăçал хĕлле кăрлай таварĕ
Сутатчĕ, пыршăсем пухатчĕ.
Çитес телейĕн тутине
Туятăн çичĕ çухрăмран.

Эрпике

Чăнах та, пыршăсен шăрши,
Инçе пулсан та, питĕ паллă.
Çураç кăна, кайран ан ӳкĕн,
Çӳçӳ пуса пекех шуралĕ.

Курак

Малтан хăрушă çил-тăман
Кĕрлет вăл çамрăк-кĕрĕмĕн,
Кайран килет уяр çанталăк.
Яштак пӳ-силлĕ хурама,
Чи малтанах пуртта курсан:
—Алла лекместĕп, хуçăлмастăп—
Тесе пĕччен шавлать, тет имĕш
Вутпа пĕçерттерсе аваççĕ;
Вара вăл, хурама, каппайчăк,
Этем пĕкки пулать, çӳрет
Шăнкăравсем янтăратса.

Эрпике

Мана пуян пĕкки çине
Çакасшăн шăнкăрав туса,—
Хăвна епле пайта илесшĕн?

Курак

Пăхса ӳстернĕшĕн укçа.

Эрпике

Пушмак пăру пекех сутма
Ӳстертĕн-и?

Курак

Авалтанпа
Йăла пырать. Хĕрĕм, ан макăр!

Эрпике

Эп макăрăп-и? Асту, çураçăн...
Туй умĕн черккӳне йатсан,
Хам аллăмпа хама вĕлерĕп,
Вара типшар ӳкни çинчен
Ху ĕмĕрне ялан асилĕн,
Ылханла манăн чун сана
Хăратĕ, тăмана пулса,—
Пӳртӳ çинче çĕрле хăрушă
Ӳхлетĕ, хуп-хура кушак
Пулса тăрмалĕ алăкна.
Тĕлĕкӳнте çумна эп килĕп,
Укçа пек, çылăхлă чуна
Сар çăпала çине хурса
Пырса тыттарăп аллуна.
Асту, анне!

Курак

Епле хаяррăн
Сăмах калатăн аннӳне.

Сана хам аркăм çийěнче
Ачашласа ӳстертěм эпě,
Мăян çисен те, кăкăрти
Сěте ěмтертěм.

Эрпике

Мěншěн-ха
Çуралсанах тытса çапмарăн
Юпа çумне? Пуç миммисем
Саланěччěç, паян сана
Кăтартмăттăм усаллăха.

Курак

Ěне пекех ěнерсěр эсě.
Пурне те манăн, çимěкре
Шап-шур пěркенчěк пěркенсен.
Ухмах-и эсě? Вунçичче
Çитсен те амăш хӳттинче
Ларать-и хěр? Пиçсе çитсен,
Ялан татаççě çырлана.
Кайран тути те ун йӳçенчěк.

Эрпике

Тěкленнě кайăк та, анне,
Тăмасть çуралнă йăвинче,
Анчах каять чěри тěлленě,
Чěри юратнă еннелле.

Курак

Ăнкар ачам! Сана телейлě
Тăвасшăн эпě, пурлăхра

Хаваслӑ утнине курасшӑн.
Типтерлӗ ырӑ евчӗсем
Вунҫиччӗри хитре хӗрсемшӗн
Анчах ҫакаҫҫӗ шӑнкӑрав.
Ватта юлсан, хӑпса килеҫҫӗ
Шӑрт пек сухаллӑ урҫасем.
Чӑвашсене Ахрумкӑ пуп
Ӗнер тӗне кўртни пирки
Пӗлме кўрше каям-ха эпӗ.

(*Тухать*).

V

Эрпике

Тӗне кўртни ҫинчен-и? Евчӗ
Хыпаре илӗртет ӑна.
Вӑрҫсан та, тулашсан та, пурпӗр
Анне каланинче пурах
Тӗрӗслехсем: пике хӗрсенӗн
Шӑпи хавассӑр та тивлетсӗр.
Йӑмра ҫинче ўсет-и ҫулҫӑ,—
Кӗрхи кунта ҫилсем вӗрсессӗн,
Татса каяҫҫӗ инҫене.
Ҫаплах хӗр ӗмерӗ. Ўсетӗн,
Тытса параҫҫӗ ҫич юта,
Шап-шур пӗркенчӗк айӗнче
Йӗретӗн те, пулатӑн арӑм.
Ытла хӑрушӑ шутлама,
Анчах та чӑн, унтан иртеймӗн.

Паян çураçĕç, çимĕк çитĕ,—
Туй пулĕ, ирте ĕмĕрĕм.
Ак çака вăхăтра, паян
Ăçта-ши, сыва-ши Тутимĕр?
Никамшăн палла мар çĕрте
Пĕр тĕмеске тăпри пĕчченӗçĕ
Çĕкленеймен-ши инçетре?
Е вăл тарса çӳрет-ши халĕ
Сĕм-сĕм хура вăрмансенче?
Мана аса илсе асаплăн
Сывлать-ши вăл?
Вилмен пулсан,
Хĕвел хăяккăн пăхнă чух,
Хăйĕн мĕлки пекех унтан
Юлмастăм эп, ялан мана
Хăй асĕнче тытса çӳрет-тĕр.
Ик çул та иртрĕ, икĕ хут
Пĕрмай хаваслӑ çутçанталăк
Ем-ешĕл тумтирне хывса
Юрпа пĕркенчĕ, çĕнĕрен
Каллех ту тăррисем ешерчĕç.
Юркан пек курăк çийĕнче
Сикеççĕ путексем. Тутимĕр
Хăй мар, хыпар-хăнарĕ те
Кунта пĕрре те çитеймерĕ.
Шур Атăл хĕрринчи хумсем
Ыраççĕ, тепĕр хĕррине
Каçмасăрах сӳнеççĕ, тет.
Çапла Тутимĕрĕн хыпарĕ.

Ик çул ёлёк кунта пăлхавăр,
Çурхи шыв пек тапса тухсан,
Тутимĕр ячĕ таврара
Кăвак хуппи пек туйăнатчĕ.
Майра патша салтакĕсем
Эрне хушши юнпа хĕретрĕç.
Ем-ешĕл пирĕн хирсене,
Тăвата çухрăм хушшинче
Пĕр утăмран пĕрер çынна
Çакса вĕлерчĕç, çăхансем
Сăха-сăха унта хăруша
Кăранклатса нумай вĕçетчĕç.
Тутимĕр тарчĕ Пушкăрта,
Çеçен хирсен кĕмĕл кăлканĕ
Ăна хăтарчĕ вилĕмрен.
Анчах Чемей пичче, ун ашшĕ,
Тертленчĕ, курчĕ асапне.
Ăна тытса ялтан яла
Çӳретрĕç, çурăмĕ çине
Кăварлă тимĕр пуснине,
Ун чĕлхине касса, йытта
Çитернине хамах эп куртăм.
Çунтарнă çурчĕ вырăнне
Лартса хăварнă пĕр юпа;
Хура юпа. Чемей сехмечĕ,
Паян та пур, тирек пек çӳлĕ,
Çынсем калаççĕ: çав юпа
Çуллен çултан çӳле ӳсет, тет.
Кăвак пĕлĕтелле çитсе

Çынсем курса тăраннă пусмăр
Çинчен вăл аслă пӳлĕхе
Пурне те каласа парать, тет.
Хура юпа, Чемей сехмечĕ,
Çӳлтен çӳле ӳссе çитсе
Хăватлă пӳлĕх умĕнче
Калассине кĕтет мĕн халăх,
Çавна кура та çăлкуçне
Чавса çитернĕ ун умне.

Тăрна сасси! Епле янтрать вăл!

(*Чӳречерен пăхать*).

Пĕлтĕр çапла пĕр уçă ир
Тутимĕре кĕте-кĕте
Хурланнă вăхăтра пĕр ушкăн
Тăрнасене курсан, эп юрă
Хам ăсăмпа кăларнăччĕ.

(*Юрлать*).

Ан васкăр, тăрнасем, çунат сулма!
Çĕрте мăнтарăн эпĕ, Эрпике.
Кăварлă юрату ман куçăма
Çунтарчĕ, хуçрĕ тӳрĕ пилĕке.

Шур Атăл хĕррине çитме халь ир.
Унта тĕтреллĕ сывлăш уçăлман,
Хурчăкасем кĕтеççĕ вĕçĕмсĕр.
Ан кайăр! Пĕр хыпарăм пурччĕ ман.

Кăштах тăрсан, çанталăк тап-таса
Уяртĕ. Итлĕр-ха мана унччен.
Çунатăрсем çине çыру çырса
Тутимĕре пĕлтерĕр ман çинчен.

Тутимĕре çитерĕр салама,
Умне хăяккăн ӳкчĕр шур тĕксем.
Тархасшăн чарăнăр çунат сулма
Эсир, янравлă саслă тăрнасем!

Савни килсен, çутатăп куçăма,
Тӳрлетĕп эп хăва пек пилĕке.
Тутимĕре çитерĕр салама,
Вара лăпланăп эпĕ, Эрпике.

(*Курак кĕрет*).

## VI

### Курак

Тутимĕре текех ан асăн.
Иртни—иртнех, юрри те irttĕр!
Ухмахланса савни çинчен
Юрлана чух, мăшăр утпа
Иртсе пыратчĕç евчĕсем.
Тутимĕр паттăр йĕкĕтчĕ,
Чăпар чĕреллĕ, теветкел.
Ун ячĕпе усал сăмахăм
Пулманччĕ, пулмĕ те, ачам.
Çухалчĕ вăл, вилес пулсан,

Тӑпри ун ҫӑмӑл, канлӗ пултӑр.
Ӑна кӗтсен те—усӑсӑр.
Хырсем те ҫулҫӑсем тӑкмасӑр
Килеймӗ хӑйӗн ҫӗршывне.
Ҫӳлти аттемӗр, пӳлӗх турӑ,
Илемлӗ пӳ-сине пама
Пӗрре те ӳркенмен, анчах
Телей валеҫнӗ самантра
Шӑпасӑр юлнӑ вӑл—Тутимӗр.
Чӗлхем чараксӑр, ҫӗрҫӑтман!
Кунта вӑй-шайӑн калаҫса
Ахаль irrтертӗм вӑхӑта.
Нумай та тӑмӗ, евчӗ килӗ:
Тумлан,васкаччӗ, Эрпике.
Кӗлет уҫма тытсамччӗ уҫӑ.
Ҫӳпҫӳ унтаччӗ.

Эрпике

Чӑнласах.
Евче кӗтсе калатӑн мар-и?

Курак

Суйма айван ача-и эпӗ?
Ик евчӗ халӗ кӳршӗре.

Эрпике

Тӑхта, анне! Пӗр ҫул иртсен.
Ҫураҫӑн.

Курак

Ан ваклаш. Каланă!

Эрпике

Юрать эппин.

Курак

Ытти хĕрсем
Çураçнă умĕн татăлса
Йĕреççĕ. Эсĕ куççульне
Шеллетĕн-и?

Эрпике

Куççулĕ пулĕ,
Кайран та макăрăп, анне!

(*Тухать*).

## VII

Курак

Хĕр ӳкĕте кĕрессине
Шанманччĕ, хăраса чĕремçĕм
Сикетчĕ. Сарă пурçăн тутăр
Çыхма ан мантăрччĕ, унпа
Питех илемлĕ куранать.
Пӳртре çӳп-çап. Кĕтессенче
Эрешменсен картийĕсем
Шăналăксем пек каранса
Тăраççĕ. Маннă тасатма.

(*Урай шăлма тытăнать*).

Çири кĕпе те çĕтĕк-çатăк.
Кăштах тăрсанччĕ евчĕсем,
Тумланăттăм çапах пăртакçă.
Хапха сасси. Килеççĕ мĕн.
Тусан тустартăм. Çĕнĕ сарă
Çыхса пулмарĕ, хăямат.
Çӳлти аттемĕр, пӳлĕх тура,
Мана çемçе чĕлхеллĕ ту,
Хĕре пама тархасшăн пулăш!
(*Евчĕсем кĕреççĕ*).

## VIII

Карчăк

Инçе çĕртен тап-такăр çул
Çитерчĕ сирĕн килĕре.

Курак

Ирех, сире кĕтсе, хаваслă
Çилсем уçатчĕç хапхана.
Пире хисеп сунса кĕнишĕн
Мерттес!

Старик

Çынсем калана тăрăх
Пушмак пăру пурри çинчен
Хыпар илтсе эпир килетпĕр.

Карчăк

Ӳссе пӳ илнĕ пирĕн вăкăр
Пĕрмай пушмакшăн макăрать.

Курак

Пӳшмак тени вăл пирĕн пурччĕ.
Кирлех пулсан, калаçăпăр,
Тĕпелелле иртсе ыр сунăр.

Старик

Чĕре тулли сăмахăршăн
Хисеп те тавтапуç, тăхлачă!

ЧАРШАВ

## ИККĔМĔШ АКТ

Аслă урам. Уйăх çутти. Ватă йăмрасем айĕнчи пĕренесем çинче çамрăксем лараççĕ.

### I

Пĕр хĕр

Иртсе çухалĕ çимĕк каçĕ.
Татти-сыпписĕр тăсăлса
Шăвать вара хуллен çеç пурнăç.
Кĕрхи уллах пуçланиччен
Пĕрре те ташă-юрă пулмĕ.
Чи юлашки вăййа тухатпăр.

Тепĕр хĕр

Çапах анасласа пуш-пушă
Ларатпăр пĕрене çинче.

Пĕр каччă

Ташлас эппин. Выля, кĕслеçĕ!

Пĕр хĕр

Малтан пуçлаччĕр каччăсем,
Унтан эпир те.

### Пĕр каччă

Яра пар!

*(Кĕслеçĕ вылять. Пĕр ушкăн каччă карталанса, такмакласа ташлать).*

### Ташă такмакĕ

Вăтăр çухрăмра, унта,
Пĕлтер пултăм пасарта.

Сутрăм мăнтăр виç така,
Илтĕм атă—йĕс такан.

Йăнтăр-янтăр кĕслĕре
Çапăр-çапăр кĕвĕре.

Йĕс таканăм урара,—
Такăрлатăп çуртăра.

Кĕррĕс-кĕррĕс хыр урай
Кĕрĕслеттĕр, тапнă май.

Хыр урайĕ хуçăлсан,
Чăлпăр-чăлпăр салансан,—

Айăп пулмĕ çамрăкăн,
Айăп—мăнтăр виç такан.

Тăпăр-тăпăр-тăпăртăк,
Тапăр-ха тата пăртак!

Хыр урайĕ хуçăлман,
Ватăр-ватăр вăркăнман...

Мĕншĕн, мĕншĕн вăркăнман?
Е начар-и йĕс такан?

Е ахаль-и виç така
Илчĕ атă сутакан?

Пĕр хĕр

Мăнтарăн тантăш Эрпике
Тата унпа хĕрсем ик-виççĕн
Килеççĕ карăнса кунта.
Ыран пуçланĕ туй. Ăсанĕ.

Тепĕр хĕр

Кĕтер пуль юрă юрласа.

Юрă

Акăшсем пекех хавасла
Шавлă вăйă-кулăра
Ўсрĕмĕр ем-ешĕл аслă,
Аслă уçă улăхра.

Шăнкăр-шăнкăр шăнкăравлă
Каччă çуртăра кĕрсен,
Мĕншĕн патăн эсĕ алă,
Илĕртрĕç-и куçĕсем?

Мĕншĕн çыхрăн шурă тутăр
Хурама пĕкки çине?
Мĕншĕн патăн тутлă утă
Урхамах лашисене?

Илемӳ каять мĕн санăн
Çичĕ юта—инçене.
Куççульне тăкса шăварăн
Урхамах лашисене.

Сурпанна çыхса хурланăн,
Курăн, тӳсĕн инкеке,
Пуç тайса килен, тăванăм,
Çĕмĕрт куçлă Эрпике.

(*Эрпике вăйăваррине кĕрет*).

## II

Эрпике

Мана кĕтсе хĕн-хурлă юрă
Юрлатăр.

Пĕр каччă

Савăнăç ури
Пусмарĕ пирĕн урама.

Эрпике

Инкек пирки кирлех те марччĕ.

Пĕр хĕр

Пĕрле ӳссе çӳренĕ тантăш
Инçе каять те, пирĕн юрă
Çавна кура та эрлĕклĕ.

Эрпике

Кайран та макăрма пире
Кунсем капланĕç, халлĕхе
Хаваслăн юрлăр, шăрантарăр!

Пĕр каччă

Пире Тутимĕр тĕл пулсан:
Шап-шурă манăн акăша
Эсир тыттарнă куçкĕрет—
Тесен, мĕн калăпăр вара?

Тепĕр хĕр

Ирхи тăм евĕр каччă куçĕ
Пĕрре ӳкет те ирĕлет.
Ăсанчĕ Пушкăрта, çухалчĕ.
Унта хĕрсем сахал-и уншăн?

Пĕр каччă

Тим шывĕ хĕрринче пăлхавăр
Пыни çинчен çӳрет хыпар.
Пĕр пушкăрт-пĕлĕш пасарта
Ĕнер каларĕ. Тен Тутимĕр
Вăрах та тăмĕ, пĕрхĕнсе

Килсе те çитĕ, тепĕр хут
Тапранĕ-ха Чемей сехмечĕ.

Пĕр хĕр

Каять-и халăх ун енне?
Каллех те юпасем çине
Çакнисене курма тивет-и?

Пĕр каччă

Хĕлхем ӳксен, тăрать те халăх,
Тытать те—çанă тавăрать.
Пире калатăр çеç Тутимĕр,
Турчăкаран тăватпăр хĕç.

Тепĕр хĕр

Иртсе те кайĕ çимĕк каçĕ,
Кайран калаçăр, ирхине.
Çеçкеллĕ çĕмĕрт пек шап-шурă
Тукас вăййи кунта килет.

(*Картине тăрса юрлаççĕ*).

Юрă

Тĕвик-тĕвик текерлĕк,
Ăçта каян, текерлĕк?

—Тăван киле каятăп,
Чĕпсем патне васкатăп.

Тӗвик-тӗвик текерлӗк.
Ҫурту ӑҫта, текерлӗк?

—Ҫӳлӗ тӑвӑн аркинче,
Тыла пуҫҫи айӗнче.

Тӗвик-тӗвик текерлӗк,
Ҫурту епле, текерлӗк?

—Мачча ҫинче пӗр тӑтӑш
Ӳссе кашлать ват хӑмӑш.

Тӗвик-тӗвик текерлӗк,
Урай мӗнтен, текерлӗк?

—Шурӑ чултан урайӗ,
Мамӑк сарнӑ—пит лайӑх.

Тӗвик-тӗвик текерлӗк,
Мӗншӗн ҫӳлте, текерлӗк?

—Ҫӳл ту ҫинчен пӑхсассӑн,
Йӗри-тавра хаваслӑ.

Тӗвик-тӗвик текерлӗк,
Мӗншӗн апла, текерлӗк?

—Тырӑ-пулӑ хумханать,
Аслӑ халӑх савӑнать.
(*Икӗ вӑйӑ пӗрлешеҫҫӗ*).

III

Пӗри

Лере, малта пӗлӗт хӗрелчӗ.

Тепри

Вӑрман улпучӗн ҫурчӗ ахӑр
Ҫунать пулас.

Виҫҫӗмӗш

Чӑнах та ҫавӑ.
Капан пек пысӑк ҫулӑмсем
Вӗҫеҫҫӗ.

Тӑваттӑмӗш

Паҫӑрах каларӑм.
Куратӑр-и, Чемей сехмечӗ
Пуҫланчӗ ӗнтӗ тепӗр хут.

Пиллӗкмӗш

Тинех тӑван ялне Тутимӗр
Килсе хускатӗ пӑлхава.
Хай ашшӗн чӗлхине каснишӗн
Улпутсемпе тиексене
Вӗри ҫатма ҫинче ташлатӗ.

Пӗри

Ыран туйра ҫӑп-ҫӑмӑллӑн
Ташлас тесе апат ҫименччӗ.

Епле пӗркенчӗк пӗркенме
Манман-ши эсӗ, Эрпике?

Эрпике

Пӗркенчӗк ҫӗлемен. Хӗвел
Ирех пӗлтерӗ чӑннине.

Тепри

Пуса каччи пуласшӑн эпӗ
Чӗн саламат ярапине
Хур ҫӑвӗпе ҫемҫетнӗччӗ.
Хапхасене ҫапса пулмарӗ.

Виҫҫӗмӗш

Ан ӳкӗн! Кирлӗ саламат!
Унпа пӗрре Тутимӗр каччӑ
Авкалӗ-ха.

Тӑваттӑмӗш

Кама?

Виҫҫӗмӗш

Э... Эр...
Калас-и?

Тепри

Пи...

**Виççĕмĕш**

...Кене...

(*Кулаççĕ*).

Пĕри

Ан тăрăхлăр! Эпир Тутимĕр
Ятне илтсен те час-часах
Нумай хурланнă, тантăшсем,
Сахал-и юрăсем юрланă?

Юрă

Утна йĕнерлесе, Тутимĕр,
Сиктертĕн аслă çул çинче.
Ăçта иртет сан паттăр ĕмĕр,
Ăçта, хăш çăлтăр айĕнче?

Шур Атăл хĕрринче пулсассăн,
Хĕвел хĕртсессĕн, çăмăр пул!
Аслатилле хăватлă саслăн,
Пире пăхса, юлташăм, кул!

Пĕлĕт пулса çуса эс ирт те,
Шăвар çеремлĕ хирсене,
Тăр кăнтăрла, каçпа та, ир те
Ӳстер çăра çарансене.

Кунта килсем, килсем, Тутимĕр!
Йĕнер хуратпăр утсене.

Сан сассуна эпир кётетпёр,
Хайратпăр çиçём хёçсене!

Пёри

Уй хапхинчен пёр юланут
Кёрет. Куртăр-и? Пăшаллă.

Тепри

Пăшалё уйăх çутинче
Çап-çута курăнать.

Виççёмёш

Тарар-и?
Улпут-и, е тиек-и?

Пёри

Эй, хёрсем,
Тарса пытанăр! Хăвăртрах!

*(Хёрсем чупаççё. Тутимёр кёрет).*

## IV

Тутимёр

Тутимёр эпё! Хăвăрăн!

Сасăсем

Салам, салам Тутимёре!

Тутимёр

Авланнисен—хур тёк минтерё
Çемçе хăпартăр! Тутлă ыйăх-—

Сухал ӳстернӗ ҫынсене,
Сире, пӗр тантӑш юлташсем,—
Сар уйӑх—куҫӑрсем умне,
Шеп юрӑ—чӗлхӗрсем ҫине!

(*Вӑйӑ пухӑнать. Пурте Тутимӗрпе паллашаҫҫӗ*).

Пӗри

Ёҫленӗ-тӗр. Аллу пит хытӑ.

Тутимӗр

Ҫӑтмах ҫӗрне кайманччӗ эпӗ.
Кӑлканлӑ Пушкӑрт хирӗнче
Карланкӑ пур тесе, атьсемӗр,
Никам та кашӑк тыттармасть.

Тепри

Кунта чухне манпа пӗртанччӗ.
Кашта пек ӳснӗ, яштака.
Хӑлхи таран та пулмӑп эпӗ.

Тутимӗр

Кӗсре сӗчӗ ҫӑра хӑймаллӑ,
Сипетлӗ ҫыннӑн пӳ-сине.

(*Эрпикене алӑ парса*).

Хӑяккӑн тайӑлса кӑна
Мана пӑхатӑн, Эрпике...

Эрпике

Каçар, Тутимĕр, ăнсăртран...

Пĕр каччă

Ан вăлт, ан тун—уру çине
Ют ял мăкла ĕни таптанă.

Тепри

Хĕрпе кайран та ачашланăн,
Ик çул ăçта çӳренине
Йĕркипеле тĕрĕс-тĕкеллĕн
Кала пире, кала, Тутимĕр.

Сасăсем

Кала! Пĕлесшĕн çамрăк-кĕрĕм!

Тутимĕр

Эппин пĕлтерĕп, тантăшсем!
Çич ял çĕкленĕ пăлхава
Майра патшан салтак эшкерĕ
Касса хып-хытă пусарсан,
Пĕччен турпас пек эпĕ юлтăм,—
Турпас пĕтет-и кăлăхах,
Шыва ӳксен те—вăл путмасть.
Ниçта та хӳтлĕх çуккипе
Вăрмансенче тарса çӳрерĕм,
Çырлапала кĕпçе анчах
Яра кунхи апатчĕ ман,

Лаша йĕнерĕ—ман минтерĕм,
Хăйăчикки—сап-сарă уйăх.
Кĕрхи çанталăк сивĕтсен,
Çул тытрăм Пушкăрт хирнелле.
Шăнтсан—хуркайăк кăнтăра!
Çаплах ман евĕр таркăнсем
Епле пулин те канлĕ вырăн
Тупасшăн пухăнна унта.
Пĕр вата пушкăрт—муллă çын
Тара тытсан—кĕтӳçĕ пултăм,
Тăватçĕр лашана пĕччен
Çеçен хирте кĕтсе çӳрерĕм.

Пĕри

Унта-мĕн ирĕк, чăн тĕнче!

Тутимĕр

Чăваш пекех тӳсмест-и пушкăрт
Хура çăханăн пусмăрне?
Хирсем нумай, анчах çăраллă,
Уççи харамăн аллинче.
Унта та улпутсем пыраççĕ,
Нихçан та сухапуç тивмен
Кĕмĕл кăлканлă çĕрсене
Касса илеççĕ, мĕскĕн пушкăрт
Çарансăр юлнă, çап-çара,—
Ачусене тĕве çине
Тие те кай,—салтак пăшалĕ
Персе ӳкерĕ унсăрăн.

Асапĕ пушкăрт халăхĕн
Турта пек хытă тыттарать,
Парать хăлха чиккисенчен.
Улпут, тиек тата сутуçă
Мăйран çаклатнă та ăна,
Антранă пушкăрт сывлаймасть!
Çавна кура унта, кунта та
Хутран-ситрен пăлхав хĕлхемĕ
Пĕрмай çиçет, ĕнер улпут
Юпа çинче, паян тиекĕн
Çуртне çуланă вут-кăвар,
Ыран сутуçă пĕверне
Тивретĕ ухă çĕмĕренĕ.

### Тепри

Сутуçă—суттăр. Ун таварĕ
Йĕплет-и пушкăрт çурăмне?

### Тутимĕр

Сутуçă-и? Улпут кукашшĕ,
Тиекĕн йыснăшĕ. Пĕрех!
Кунта пĕр пуртăшăн пĕр сум
Тӳлетпĕр-и? Унта ун хакĕ
Пĕр лайăх çеç лаша.

### Сасăсем

Ай! Ай!
Епле сĕвеççĕ пушкарта!

Тутимӗр

Ярса тытаççӗ пушкӑрта:
Тирне сӗвеççӗ те, хӑйне
Карта хыçне çеç ывӑтаççӗ,
Тытса хупаççӗ тӗрмене.

Пӗр сасӑ

Ӗне хакне тӑрать-и йӗп?

Тутимӗр

Унта кӗпе çӗвви çинче
Пӗрре те сӳс хӳреллӗ йытӑ
Вӗрсе, сӗвемӗ чупнине
Курмарӑм, выльӑх шӑнӑрӗ
Çӗлен çип вырӑнне пырать,
Унпа çӗлеççӗ тумтирсем.
Чӳречесем те кӗленчесӗр,
Лаша хӑмпийе—карӑнтӑк.

Тепӗр сасӑ

Эрех ӗçеççӗ-и унта?

Тутимӗр

Эрех сутма хавас сутуçӑ,
Эхер те пушкӑрт ӗçсенех,
Çири кӗпи те юлмиччен
Тулаççӗ, темӗн те суйса
Çӗрне илеççӗ, урӑлсан,—

Параççĕ мухмăр выранне
Чĕн саламат,—çаралнă пушкăрт
Каять вара хăй çĕрĕнчен.
Уç кăмăллă, пит лайăх халăх!
Юратрăм эпĕ вĕсене.
Усал ĕçсен шалçи тулать мĕн.
Сире пĕлтерĕп ыр хыпар.
Асаплă пусмăр тўснĕ хыççăн
Çиленнĕ пушкăрт халăхĕ
Тапса çĕкленчĕ вирелле,
Пăлхавçăсен хĕрў кăварĕ
Çĕкленчĕ улпутсем çине.
Пăлхав пырать вĕçĕ-хĕррисĕр.
Вĕсен юратнă утаманĕ
Юлай агайăн ывăлĕ
Çап-çамрăк паттăр Салават
Чăвашсене салам каларĕ.

Сасăсем

Сыв пултăр паттăр Салават!

Тутимĕр

Ĕнсе çинче харампырсем
Юлмичченех пурте пĕр харăс
Кĕрешĕр!—терĕ.

Сасăсем

Утăръя!
Сывпултăр пушкăрт утаманĕ!

Тутимӗр

Хӳмеллӗ Ӗренпур енчен
Улпутсене тылла-тылла
Чӑн-чӑн патшамӑр Пӑкачав
Килет. Хресчен патши саккунӗ
Кунта вӑл!

(*Хӗвӗнчен кӑларать*).

Халӑх умӗнче
Ӑна вуласчӗ, ӑнланасчӗ,
Анчах пурте эпир сӗм-суккӑр,
Хут пӗлекен ҫынсем пӗрре те
Тупма ҫук хамӑр хушӑра.

Пӗр сас

Тутар-и, вырӑс-и патшамӑр?
Кала, Тутимӗр!

Тутимӗр

Хам курман.
Ӑна тӗл пулнӑ пӗр тутар
Мана каларӗ: вырӑс, тет,
Хура сухаллӑ, яштака.

Тепӗр сас

Тутар суйман-ши?

Тутимӗр

Чӑн-чӑнах,
Патшамӑр пирӗн Пӑкачав.

Сассем

Шеп пултăр хамăрăн патшамăр,
Çĕре валеçтĕр! Утăръя!

Тутимĕр

Пĕр тиеке хушсан, ыран
Вăл вулĕ унăн саккунне.

Пĕр сас

Тиек вулать-и тĕрĕсне?

Тутимĕр

Пуçне каска çине хурсан,
Эсрел манифестне те вулĕ.

Тепĕр сас

Ахрумкă пуп пĕлет. Чĕнер-и?

Урăх сас

Чĕнес! Вулатăр! Ирхине
Мăйне пăватпăр.

Сассем

Кайрĕ уйăх,
Пытанчĕ пĕлĕт хушшинче.
Вулаймĕ. Юлтăр ырана.

Тутимӗр

Саккун ялавӗ вӗҫтерме
Чӗнет пире чӑн-чӑн патшамӑр.
Лашӑрсене ыран йӗнерлӗр,
Ирхи хӗвелӗн ҫуттинче
Хӗрелччӗр халӑх хӗҫӗсем.

Пӗр сас

Тӑпра айне пытарнӑччӗ.
Хӗҫ тутӑхнӑ.

Тутимӗр

Ҫава та пуртӑ
Улпут мӑйне касма тиркемӗҫ.
Мӑян кӗлти пек пупсене
Сиктерӗ сенӗк.

Сассем

Утӑръя!

(*Вӑйӑ кӗрлет. Юрӑ янтӑрать*).

Юрӑ

Хир-хир урлӑ, ял-ял урлӑ
Ярӑн, пирӗн юррӑмӑр!
Сӗм вӑрман пекех хӗн-хурлӑх
Тӳсрӗмӗр те куртӑмӑр.

Ан ҫӳре хирте, сухаҫӑ,
Вӑхӑт мар суха тума,

Вăхăт мар халь ирĕн-каçăн
Çурăмран тарсем тăкма.

Ĕмĕрех эпир ĕçленĕ.
Путтăр пусмăр панă ĕç!
Хăвăртрах суха тĕренĕ
Çивĕч пултăр, пултăр хĕç!

Çамрăксем хирпе пыраççĕ
Вылятса сăннисене,—
Учĕсем вĕсен таптаççĕ
Улпутсен тыррисене.

Тимрĕçсем хĕçсем тăваççĕ
Тăшмансен пуçне касма.
Йĕнерле утна, сухаçă,
Вăхăт мар суха тума!

(Вăйă каять. Шавлани илтĕнет. Пĕр вăхăта урам пушанать. Пилĕк-ултă каччă кĕреççĕ).

### V

Пĕри

Тинех мĕн самана сакки
Сăпка пек сиктерме пуçларĕ,
Тыттарчĕ хĕç. Шеллеттĕм эпĕ
Çунатсăр çамрăк ĕмĕре.

Тепри

Хресчен патши чăнах пулсан,
Хăруша марччĕ, шанчăклă.

Пăлханăпăр. Вăл килмесен,
Апшур салтакĕсем кайран
Ăшалĕç, вĕсене касма
Мăй пулĕ купăста кучанĕ.

Виççĕмĕш

Апла сехрӳ хăпсан, ан хутшăн,
Кĕл çиййĕнче пăрçа суйла,
Е кай та кӳлĕ хĕррине,
Чулсем пăрах, хум ункă пулĕ,—
Пăхма хитре.

Тепри

Ан кул! Санран
Начар-и эпĕ?

Виççĕмĕш

Иксĕмĕр
Пĕрех. Эпир—айван айванĕ,—
Шикпе шикленнĕ, кĕрĕкпе
Пĕркеннĕ, хамăр халиччен
Чĕрне çинче шăрка вĕлернĕ.

Тепри

Халех кайсан, Ахрумкă пуп
Тĕне кӳртеймĕ ирхине.

Тăваттăмĕш

Ан тив! Ыран ăна Тутимĕр
Патша саккунĕ вулаттарĕ.

Пĕри

Тарсан?

Тепри

Чăнах, Ахрумкă тарĕ.
Тытар та мунчана хупар.

Виççĕмĕш

Васкар эппин. Ун лашисем
Çăра çилхеллĕ, чăп-чăпар.
Пурте йĕнерлĕ те таканлă.
Утланăпăр, э-эх, тӳп-тӳрĕ
Улпут çине!..

Тăваттăмĕш

Ăслă каланă!
Чавка пекех Ахрумкăшĕн
Варланмăпăр, кăштах пĕр-иккĕ
Çапсан, хупатпăр мунчана.
Улпут чăнах та пысăк кайăк,
Тĕкне çăлсан та—кăмăллă.
Вĕçер!

Тепри

Тăрар та алла-аллăн,
Иртер-ха вăйă умĕнчен.

(Ташласа каяççĕ. Пăртакçă тăрсан, Тутимĕрпе Эрнике кĕреççĕ, пĕрене çине лараççĕ).

## VI

Тутимĕр

Куç-куçăн курасса шанманччĕ.
Инкек пекех телейĕм манăн
Кĕтмен çĕртен те ăнсăртран
Хама тĕл пулчĕ, Эрпике.

Эрпике

Пăртак кая юлса, Тутимĕр.

Тутимĕр

Варли виç çул хушши кăвар
Тытать, тет, ывăçĕ çинче.
Ик çул кăна кĕттертĕм эпĕ.

Эрпике

Мана çураçнă, хулăм илнĕ.
Тул çутăлсан, пуçланĕ туй.

Тутимĕр

Савса-и?

Эрпике

Каччине те эпĕ
Çураçиччен малтан алхапăл
Пĕрре çеç курнă, калаçман.

Тутимĕр

Эс пулмасан, килместĕмччĕ.
Палханнă пушкăрт çĕрĕнче
Юлаттăм. Çук, чĕре чăтать-и?

Усал пулсан та, хамăн килĕм,
Тăван çĕршывăм илĕртет.

Эрпике

Пĕр чĕптĕм айăп та çук манăн.
Атте-анне канашĕнчен
Тухсан, хаяр ял-йыш элекĕ
Хура курак пек явăнĕ
Телейсĕр пуçăм çийĕнче,
Тата атте-анне ылханĕ.

Тутимĕр

Пĕрне пĕри пăрахмасса
Тупа туни çухалчĕ пирĕн.

Эрпике

Илтмен-и эсĕ пĕр халлап?
Çурхи кунта кăвак чечек:
— Ялан сана пыл çеç çитерĕп—
Тесе калать, тет, пылхуртне.
Кĕр кунĕнче чечек сап-саррăн
Хăрать. Пылхурчĕ макăрать.
Кам айăплă? Кăвак чечек-и?

Тутимĕр

Кĕр кунĕ.

Эрпике

Кĕр кунĕ—самана.
Чечекĕ—эпĕ. Пылхурчĕ—эсĕ.

Тутимӗр

Пӑлхав ҫӗнтернӗ хушӑра
Хӗвеллӗ самана ҫӗкленӗ.

Эрпике

Хресчен патши саккунӗнче
Хӗрсем ҫинчен сӑмах ҫырман-и?

Тутимӗр

Пурне те ирӗк килӗ—тенӗ.

Эрпике

Вӑл вырӑс та, чӑвашсене
Саккун та памӗ, ютшӑнӗ.

Тутимӗр

Ун ҫумӗнче пулать чӑвашӑн
Хӑйӗн патши.

Эрпике

Эппин, эп санӑн.
Ҫӗр тенкӗ хулӑмне калла
Парасчӗ.

Тутимӗр

Ик ҫул хушши пӗр пусӑн
Пуҫтартӑм эпӗ хулӑмшӗн.

(*Сурпан сырнӑ Курак кӗрет*).

## VII

Курак

Ах, пӳлӗх тура! Пысӑк намӑс
Чул пек йӑванчӗ ман ҫине.

(*Тутимӗрпе Эрпикене курать*).

Кунта, шуйттан илесшӗ!
Ай-ай! Кам ку! Тутимӗр мар-и!

Тутимӗр

Чӑнах та ҫав, Курак инке.
Аван-и?

Курак

Ан паллаш, мур чунӗ!
Ан хапсӑн манӑн хӗрӗме.
Апла-капла хыпар тавращӗ
Сарӑличчен, киле шӑв-шавсӑр
Утар пуль, хӗрӗм Эрпике.
Туй лартмалла—сана шыра!

Эрпике

Пымастӑп эпӗ.

Курак

Ку сӑмахшӗн
Ҫапан тухасчӗ чӗлхӳне,
Ҫураҫнӑ хыҫҫӑн чуптума

Туту хăрасчĕ. Ых, усал!
Ача чухне ман аркăма
Саратнă, халĕ, çĕр çăтман,
Аннӳн пуçне çӳп-сап сапасшăн.
Чакак ами, атя киле!
*(Сĕтĕрме хăтланать).*

Эрпике

Ан çыпçăн!

Курак

Саншăн хулăм илнĕ,—
Ята яратăн ял çинче.

Тутимĕр

Кăшт сапăр пул, Курак инке!

Курак

Пуçне ан çавăр хĕрĕнне,
Ан чĕн, эсрел чури, Тутимĕр!

Эрпике

Тутимĕр мăшăрăм пулсан,
Мĕн калăн-ши?

Курак

Итем çинче
Малтан юман лартса ӳстертĕр,
Унтан хăйне пура пуратăр,—

Вара эс пулăн арăмĕ.
Аннŭ сăмахĕ хывăх-и?
Тутимĕр пăсĕпе вĕçет-и?
Атя, пĕркенчĕк айĕнче
Савни çинчен мар, хĕвеле те
Аса илеймĕн, Эрпике!

Эрпике

Кĕл вучахне аксамччĕ кантăр,
Пăхса ŭстер, сŭсне тылла,
Пирне тĕртсе çĕле пĕркенчĕк,
Унтан эп ларăп ун айне.

Курак

Ухмах-и эсĕ? Хулăм илнĕ,
Пŭрте сипленĕ укçипе.

Эрпике

Сире укçа Тутимĕр парĕ.

Тутимĕр

Çинçе-и, хулăм-и,—çапах
Паратăп эпĕ хулăмне.

Курак

Аçу кукши çинчи шăрка-и?
Çŭре-çŭре шăна-пăван
Пухса килмен-и ют çĕртен?
Сан пек тăрлавсăр йĕкĕте

Хӗр париччен—килте хӗр лартăр,.
Кӗрӗк арки çеç йăвалатăр.
Хӗрӗм, пыратăн-и?

Эрпике

Çӗр хут
Каламăп чăннине.

Курак

Эх, турă!..

(*Макăрать*).

Тӗнче илтмен киревсӗр намăс
Кăтартрăн аннӳне. Сана-и
Пуç тайăп, Эрпике ачам!
Апла-и? Çӳç пӗрчи хăвармăп!

(*Çивӗтӗнчен тытать*).

Эрпике

Аяй, анне...

Тутимӗр

Ан турт, инке!

(*Курака чарать*).

Курак

Туй пăсăлчӗ. Сана, Тутимӗр,
Çӗр çăттăр, тамăк йышăнтăр!

Эс ҫирӗн ватӑ пуҫӑма.
Вилес пек тилмӗрсе ыйтатӑп:
Атя, утатпӑр, Эрпике.
Автан сасси. Ир кӑвакарчӗ.
Туя кӗтсе вӑранӗ халӑх.

Эрпике

Мана кӗтсе ахаль ан тарӑх!

Курак

Яла ура ҫине тӑратӑп,
Ал-уруна ҫыхтарӑп та,
Пӗркенчӗк айӗнче йӗртерӗп.

*(Эрпикене сӗтӗрет. Тутимӗр чарать).*

Эрпике

Ан ҫап, анне!

Курак

Апла эс кутӑн.
Чӗнетӗп пӗтӗм халӑха.
Хурах! Хурах!

Тутимӗр

Ан ҫухӑр! Чарӑн!

Курак

Хурах!

Эрпике

Ята ан çӗрт тархасшăн.

Курак

Чуну пăяв пек татăлтăр!
Хурах! Хурах! А-йӑ! Хăтарăр!

(*Каччăсемпе хӗрсем пухăнаççӗ*).

VIII

Пӗр каччă

Синкер-и çулăхрӗ, инке?

Курак

Тӳсме çук мăшкăл.

Тепӗр каччă

Мӗн? Кала!

Курак

Тутимӗр илӗртнӗ хӗре.
Ваттисене эсир хӗрхенӗр,
Авалхăх йăлине ан таптăр,
Эрпикене халех тытса
Киле çитерӗр. Хӗрӗм лартăр
Йӗрсе пӗркенчӗк айӗнче.

(*Макăрать*).

Пĕр хĕр

Тăван аннӳ сан, Эрпике...
Ăна итле!

Эрпике

Санран ыйтманччĕ.

Курак

Мĕскер тăратăр, йĕкĕтсем?
Каланă—тытăр та уттарăр.
Чĕнмеççĕ...

(*Чăмăрĕпе юнаса*).

Çимĕк икерчи
Ларман-и çамрăк пырăра?
Тутимĕрпе эсир канашлă?

(*Пĕр ӳсĕр çын тайкаланса кĕрет*).

IX

Ӳсĕр çын

Тавсъе! Тавсъе! Черкке тӳнтертĕм.
Тӳнмерĕм хам. Ха-ха-ха-ха!

Курак

Тăхта, хăта!

Ӳсĕр çын

Тавсъе, тăхлачă!

Курак

Ах, турă! Çулăхрĕ инкек.
Хĕре çураçнă, сăрине
Эс те активнĕччĕ пулас.

Ӳсĕр çын

Мана чĕнмен. Чипер чухне
Кирлех-и ман пек катăк пуртă?
Инкек çитсен, хăта та эпĕ,
Юлташ та хурăнташ вара.

Курак

Туй умĕн хĕрĕме Тутимĕр
Çаклатнă. Пулăш-ха илме!

Ӳсĕр çын

Мана мĕн? Туйĕ пултăр çеç.
Те çăпала, те йывăç алтăр.
Пулать эрех—мана пĕрех.
Хисеп, манран тавсъе, Тутимĕр!
Авлан та, пултăр арăмун
Пĕр пичĕ—уйăх та, тепри—
Хĕвел. Ача-пăчаллă пулăр,
Капанăрсем ултшар уралла
Çĕкленччĕр, куркăрсем çинче—
Урпа сăри хăмлаллă пултăр.
Пехил, Тутимĕр!

К у р а к

Ах, шуйттан,
Манран ыйтмасăр пехиллет.
Така шăмми карланкуна!

(*Чемей кĕрет*).

## X

К у р а к

Чемей пичче, чар ывăлна!

Т у т и м ĕ р

Атте, аван-и? Сывă-и?
Çӳçӳ хураччĕ, халь кăвак.
Чĕнместĕн. Хăвăн ывăлна
Паллатăн-и?

(*Хулĕнчен силлесе*).

Тутимĕр эпĕ.
Атте! Атте!

Ч е м е й

Аа...

(*Çăварне уçса кăтартать*).

Т у т и м ĕ р

Чĕлхесĕр...
Кам касна чĕлхине?

Сассем

Улпут.

Тутимӗр

Атте, ан макӑр! Ывӑлу
Чӗлхеллӗ, ҫакӑ хӗҫӗмпе
Калаҫӑп эпӗ улпутпа.

(*Хӗҫне кӑларса сулласа*)

Туссем, йӗнерлӗр утсене!

Ӳсӗр ҫын

Пуҫланчӗ туй. Шап-шур пӗркенчӗк
Юнланӗ-ха, Курак инке...

(Халӑх кӗрлет. Курак ӗсӗклесе макӑрни илтӗнет).

ЧАРШАВ

## ВИҪҪЁМЁШ АКТ

Галахов воевода ҫурчӗ. Стена ҫинче пăлан мăйраки-сем. Урайӗнче упасемпе тилӗ тирӗсем. Кăнтăрла. Галахов арăмӗ—Полина ураллă сăпка сиктерсе ларать.

### I

Полина

Ачамҫăм, ҫывăр, паппа ту!
Куҫна хупсан, мамма Тутимӗр
Килмест кунта. Вăранăн та
Кашта таран пы-ысăк пулăн.
Элес-мелес тискер Тутимӗр
Шикленӗ, тивмӗ аннӳне.

(*Сăпкине силлесе юрлать*).

Юрă

Кăнтăрла шавланă ҫил те
Вӗрене ҫулҫи ҫинче
Ҫӳремест, лăпланнă ӗнтӗ.
Ҫывăрать мӗнпур тӗнче.

Ҫывăрма хушса хăварчӗҫ
Сар хӗвел, ҫут кун, ăш ҫил.

Уйăх тутлă ыйăх пачĕ.
Ил ăна, ачамçăм, ил.

Эс итле пурне те лайăх:
Хĕвеле, çиле, куна!
Çывăрсассăн, ăмăрткайăк
Силлентерĕ сăпкуна.

Тĕлĕкре сана вăл лартĕ
Хăй çуначĕсем çине,
Пĕлĕтсем çинчен кăтартĕ
Юмахри тĕнчесене.

Çăлтăрсем татса тыттарĕ
Вылямa ун чух сана,
Хум çине лартса шутарĕ
Çут ахахлă сăпкуна.

*(Силлеме чарăнать).*

Тин çывăрчĕ ман тĕпренчĕк.
Хамах куллен сăпка сиктер.
Мăнтарăн эпĕ, хăрхăм чун.
Вунулттăра кăна пулсан та,
Эсрел пек вата упăшка.
Тăр-кăнтăрла пăхатăп та,
Çап-çута вĕрене çулçи пек
Кукши çинче хĕвел вылять,
Çĕрле тӳшек çине выртсан,—
Хыткан шăмшаклă хулĕсем
Касса чĕреççĕ ӳтĕме,

Кăвак пăр пек сип-сивĕ хăй.
Качча кайман пулсан, çӳреттĕм
Шăпчăк сассиллĕ каçсенче,
Лараттăм кӳлĕ херринче.

(*Галахов кĕрет*).

## II

Галахов

Хăвах сăпка сиктернипе
Сăвап илесшĕн-и, чечекĕм?
Ача пăхаканни ăçта?

Полина

Тăван çурту çинчен манса
Çӳретĕн, утмăла çитсен те,
Ху мăшăру пирки ют чунлă.
Ман çамрăк ятăма пăсса
Минтер çинчен минтер çине
Куçа-куçа алхасиччен
Килте гарем уçасчĕ сан.
Пуçтар чăваш хĕрĕсене...

Галахов

Ниçта та хăнара пулман.

Полина

Ан çухăрччĕ! Ача вăранĕ.

Галахов

Сунарçăра çӳрерĕмĕр.

Полина

Ăс ларнă çын сунарçă пулмĕ,
Варман ем-ешĕл тумлансан.

Галахов

Ахрат варне кĕме хăрушă,
Çапах та антăмăр эпир,
Ӳпан тăвата çурине
Лектертĕмĕр.

(*Çухăрса ярса*).

Яка хăлхаллă,
Кĕске хӳреллĕ, çăмламас!

(*Ача макăрма пуçлать*).

Полина

Ачамçăм, çывăр, паппа ту.

(*Ача чарăнать*).

Галахов

Ача пăхаканни ăçта?

Полина

Хуллен калаç.

Галахов

Ăçта эппин?

Полина

Тăвата кун хушши супса
Çӳретĕн те, тарçу-тĕрçӳ
Мана пĕрре те итлемест.

(*Макăрать*).

Галахов

Чечекĕм, чунăм... Кам? Хăçан?
Кушак чĕрниллĕ хăрчăкпа
Çанçурăмне тăрмалăп эпĕ.
Лăплан, чечекĕм, ан эрлен.

(*Çамкинчен чуптăвать*).

Ача пăхаканни ăçта?

Полина

Ача кипки пĕрре йĕпеччĕ.
Киревсĕр няняна кăштах
Вĕтесшĕнччĕ, анчах ман алă
Тытма пĕлет-и саламат?

Галахов

Хушас пулатчĕ пĕр тарçа.

Полина

Пĕрре мар, виççĕ те каларăм.
Мана итлеççĕ-и мурсем?

Кулаççĕ лăхăл-лăхăл çеç.
Шăмартăм та усал йытта
Ĕçертĕм сăнчăртан.

Галахов

Вара?

Полина

Ĕсси!—çеç терĕм. Сикрĕ йытă,
Какай çеç юлчĕ няняран.

Галахов

Чĕрӳ çемçеччĕ-çке, Полина.
Йăва çинчен сап-сар сăмсаллă
Çерçи чĕппи персе ӳксен,—
Йĕреттĕнччĕ. Шухăшламан
Эс паттăр пуласса. Ха-ха!

Полина

Ан ахăр. Çывăртăр ачамăр.

Галахов

Хăй амăш пек хастарлă пултăр,
Çерçи чĕппишĕн макăртăр,
Çынна курсан—йытпа ĕслеттĕр.
Ха-ха! Ха-ха!

(*Каçса кайса кулать. Хашкаса Курак кĕрет*).

III

Курак

Вайпут хăта!

Полина

Ку пĕрене кукамайне
Кам кўртнĕ-ши?

Галахов

Ан аптăраш!
Асавлă йыттăм хăрлатса
Паллашĕ кайнă чух. Ха-ха!

Курак

Пирте инкек.

Галахов

Мĕскер?

Курак

Тутимĕр...

Полина

Ах, турă...

(*Чĕркуççи çине ларса кĕлтăвать*).

Галахов

Тепĕр хут пăлхав-и?
Чемей сехмечĕ-и?

Курак

Чемейĕ

Чĕнмест, чĕлхесĕр чĕмере.
Çураçна хамăн хĕрĕме
Вăрларĕ йăпăлти Тутимĕр.

Галахов

Хунямăшĕ апла эс унăн.

Курак

Каска çинче мăя кассан та,
Куçа чавса ӳпне хуплу
Лартсан та, килĕшместĕп эпĕ.
Пĕри çураçна,—теприне
Парсан, çиленнĕ пӳлĕх тура
Асаплă манăн чунăмран
Шăши тăвать, вăйпут хăта.

Галахов

Эппин пăлхатăр, сивĕтĕр.

Курак

Тутимĕре ăçтан пăсатăн?
Ятне илтсен, чĕлхи вĕрӳçĕн
Сырлан пырши пек тăлланать.
Вĕрме-и? Хăй те сывлаймасть.

Галахов

Китай патши пин çул авал
Кăларнă эмелсен эмелĕ

Сана эп парӑп шеллесе.
Апатпала-и, сӑрапа-и
Парсан, ӑна тутанна ҫыннӑн
Чи ҫывӑх тусӗ мӑйракаллӑ
Тата хӳреллӗ курӑнать.

Курак

Турран пехил, вӑйпут хуҫа,
Манран парне — чӗп амӗш хур.
Юри пустартӑм, тап-таса.
Чӑваш тесе ахаль ан тиркӗр.

(*Пукан ҫине хурать*).

Галахов

Пӗр кун тытсан, эмел хӑвачӗ
Юлмасть.

(*Парать*).

Асту-ха, кинемей!
Эмел арҫыншӑн ҫеҫ, хӗрарӑм
Ӗҫсен, кача пӳрни хуралӗ,
Анчах пӗрре те сивӗнмӗ.

Курак

Тутимӗре епле ӗҫтерӗп?
Чӗнсен те пымӗ — вӑрҫрӑмӑр.

Галахов

Кӗрӳ тӑватӑп, — те, — куҫ хӗс!

Курак

Кайран ял куле-ҫке. Кĕрӳшĕ.
Пăрахнă, тейĕҫ.

Галахов

Вăрттăнрах,
Ял ҫыварсан.

Курак

Канашăршĕн.
Пехил, пехил, вăйпут хăта!

(*Курак каять*).

**IV**

Полина

(*Урайне пуҫҫапса*).

Хăватлă туррăмăр, сыхла!
Шуйттан чĕреллĕ ҫын Тутимĕр.
Ҫухалтăр пирĕн ҫĕр ҫинчен.

Галахов

Сахал ылханнă-и ăна?
Ҫапах вăл сывă, пĕтĕм халăх
Ун хыҫҫăн ҫĕклĕ ҫивĕч пуртă.
Эпир—вăрман.

Полина

Инкеклĕ вилĕм.

Галахов

Пуçна чулпа çапса ватсан та,
Сассу çитеймĕ пĕлĕте,
Чараймăн пăлхава. Тутимĕр
Кунта хăйне кура Суворов.

(*Полина ура çине тăрать*).

Ытла ан пăшăрхан, Полина!
Чăваш пуртти çапăниччен
Чи лайăх, çивчĕ утсене
Халех кӳлетпĕр.

Полина

Пĕтрĕмер...

Галахов

Ан макăр, ан хурлан, чечекĕм,
Вĕçес çунаттуна ан хуç,
Юратнă чунăм, кăвакарчăн.

Полина

Пуç ыратать.

Галахов

Кайран тӳрленĕ.
Укçа тата чипер тумтир
Илер те... Пăраслан енне..
Пуç хаклă. Ăпăр-тапăр юлтăр.
Хушам-ха эпĕ, кӳлтерем.

(*Тухать*).

## V

Полина

Эсрел çури иккен Тутимĕр!
Аçа çапасчĕ ун пуçне.
Ытла талантлă чунилли!..
Ик çул ĕлĕк вунçич çултаччĕ,
Анчах епле хаяр пăлхавăр
Çĕклерĕ çакă таврара;
Хапха юпи çине çакса
Вĕлерчĕ манăн аттене,
Кӳлле путарчĕ аннене.
Пыра-киле тĕреклĕ чул та
Тăпра айне юлса пĕтет,
Йĕпе-сапа ватса çиет.
Хăш чух çырма та сăрхăнать;
Хура чăваш ачи пулсан та,
Пĕтмен, каллех кунта Тутимĕр.

(*Макăрать, Галахов васкаса кĕрет*).

## VI

Галахов

Хура пĕлĕт пек ушкăн халăх
Кунта килет. Пытар, Полина!

Полина

Хама ăçта?

Галахов

Эп—воевода,
Патша çынни. Мана хăрушă.
Сана мĕскер? Эс—арăм çеç.
Юпа çине çакса, манран
Çăхансене апат параççĕ.

Полина

Пăлхавçăсем кунта мана
Киревсĕр намăс кăтартсан?

Галахов

Апла пулсан та, тиркесе
Пăрахмăп, уйăрмăп сана.

Полина

Юрать эппин.

Галахов

Çав арчана
Мана халех пытар та—питĕр!

Полина

Унта сывлайăн-и?

Галахов

Унта
Шăши кышлана вырăн пур.

Полина

Йатса кайсан?

Галахов

Вара—аминь,
Чун кайĕ ырă çатмаха,
Тăпра айне пытанĕ ӳт.
Аскавлă пул-ха, арчаран
Калаçăп.

(*Полина уçать. Галахов кĕрсе выртать*).

Полина

Мăшкăллă пулсан,
Чăнах мана пăрахмăп,—те,
Тупа тусан, сана ĕненĕп.

Галахов

Ак турă та çӳлти хĕвел.

(*Сăхсăхать. Полина арчана хупса, çăрапа питĕрет*).

Полина

Киле килмерĕ, тейĕп, эпĕ.
Ан ӳсĕр эсĕ, ан шавла.

Галахов сасси

Хам чĕлĕме манса хăварнă.
Сĕтел çинчеччĕ. Пар кунта.

Полина

Туртмасӑр тӳс! Тӗтӗм шӑрши
Пӳртре пулсан, суйма та йывӑр.

Галахов сасси

Кун пек асаплӑ вӑхӑтра
Йӑпанасси те чӗлӗмре.
Пӗр сӑвӑрсан—чӗре лӑпланӗ.

Полина

Ме, чыхӑн! Ме!

(*Арчана уҫса чӗлӗмне парать те питӗрет*).

Галахов сасси

Табакӗ юлнӑ.

Полина

Хуп ҫӑварна! Илтместӗн-и?
Пӑлхав кӗрлет.

(*Урамра халӑх шавлани илтӗнет*).

Галахов

Ӑшчик ҫунать.
Хӗртет карланкӑ. Пар табак.

(*Полина уҫса парать те питӗрет*).

Полина

(*Чӳречерен пăхса*).

Сăхманлă, çăпаталлă халăх
Вĕçĕ-хĕррисĕр хутшăнать.
Кунта килеççĕ... Пĕтрĕмĕр.

Полина чупкалать. Тулта ахăрашни илтĕнет. Чӳречесем ванаççĕ. Алăкран пĕр ушкăн хресчен кĕрет. Ача каçса кайсах макăрать.

**VII**

Пĕри

Вайпут ăçта?

Тепри

Мăйне пăяв!
Айне шалçа!

Виççĕмĕш

Паян чăвашăн
Çилли çĕкленнĕ. Пĕлтĕр вăл.
Йăваш тесе ялан кулатчĕ.
(*Полинăна чыша-чыша яраççĕ*).

Тăваттăмĕш

Кала! Эхер те пытарсан,
Пуçхĕрлĕ çакăп маччаран.
Кала, майра!

Полина

Килте пулман.
Ăçти те паллă мар.

Пĕри

Сукмакĕ
Юлман-и? Капкăн хурăпăр.

(*Пуртă йăтнă Асамат чӳречерен кĕрет*).

## VIII

Асамат

Тытма пĕлместĕр вăйпута!

Пĕри

Эс ватă çын. Вĕрент тархасшăн!

Полина

Тискерсем...
Çĕр çăттăр... Ай...
(*Йăванать, ăнсăр пулать*).

Асамат

Çуртне ухтарăр!
Чавса таран çан тавăрăр!

Пĕри

Тилли, упи, пăши-пăланĕ
Пурте хресчен вăрманĕнче
Çÿреççĕ. Тирĕсем—пире!
Майракисем—çатан çине.

(*Сĕтĕрме тытăнаççĕ*).

Асамат

Çаратăр! Хыта çĕмĕрĕр!
Кăварлă хĕрлĕ киккириклĕ
Пушар автанĕ аваттăр!
Кĕл варкăштăр!

Тепри

Тытса çакасчĕ
Ватсупнă вăйпутне малтан.

Виççĕмĕш

Шырас!

Тăваттăмĕш

Унта-кунта пăлхатăр!
Кĕрсе ларман-ши нÿхрепе?

Пиллӗкмӗш

Патшалӑх хамӑрта чухне,—
Мӑйне пӑвасчӗ, тӑвансем!
Хӑварӑпӑр,—кайран хаех
Пиртен пӑчӑр тӗкне ҫӑлтарӗ.

(*Чупкалаҫҫӗ*).

Пӗри

Ха, мерекке! Арча ҫунать-и?
Вӗлермелли ӑсталӑх мар-и?
Тӗтӗм мӑкӑрланать, атьсемӗр.

(*Арчана пырса шӑрӑшлать*).

Ак турӑ, чӗлӗм тӗтӗмӗ!
Вайпут кунта!

(*Пуртӑсемпе хайӑрса уҫаҫҫӗ*).

Тепри

Ха-ха!

Виҫҫӗмӗш

Ых-ха!

Пурте

Ха-ха!

Асамат

Аа... Кунта иккен
Мухтавлӑ ҫимӗкӗн автанӗ.

Пĕсехинче тĕк выранне
Майра патша санлă ӳкерчĕк.

(*Галахова сĕтĕрсе кăлараççĕ*).

П ĕ р и

Пусас!

А с а м а т

Малтан тĕкне çăлатăп.
Самси мана!
(*Чĕлĕмне туртса илсе хăй хыпать*).

Табакĕ тутлă.
Вырт!—тенĕ. Çук-и? Ак сана!

(*Çапса ӳкерет*).

П ĕ р и

Умне мĕн чухлĕ çутă çăлтăр
Çӳлтен антарнă, хăямат.

Т е п р и

Вайпут пул, Асамат пичче!
Кунта эс пуринчен те ватă,
Сухал та санăн икĕ шит.
Сана суйлатпăр. Йышăн!

А с а м а т

Юрĕ,
Патша пулма та хирĕç мар.
Вайпут тумтирĕ ман çие!

Виççĕмĕш

Саплана Асамат сăхманĕ—
Ăна.

Асамат

Вайпут пулма эп хатĕр!

(*Галахов тумне хывса Асамата тăхăнтараççĕ*).

Пĕри

Сăхман Калахăн. Тăхăнтăр!

(*Галахова Асамат сăхманне тăхăнтараççĕ*).

Пĕри

Хисеплĕ Асамат вăйпут,
Саккун кăлар, сулла хĕçне!
Хĕстер! Ха-ха!

(*Асамат Галахов умне тăрать*).

Асамат

Калах!

Галахов

Итлетĕп.

Асамат

Куланаю нумай-ха санăн.
Тӳлемесен, лекет чĕр хулă.

Тăпра çинче çӳренĕ эсĕ,
Эрех те ĕçнĕ, çăкăр чыхнă,
Çапах пĕр сум та тӳлемен.
Чăваш вайпучĕ халĕ эпĕ,
Хресченĕ—эс.

Галахов

Тарçу пулатăп.
Юласчĕ сывă, мăйкăчсăр.

Пĕри

Хресчен пулма пĕлетĕн-и?
Вĕрент-ха, Асамат пичче!

Асамат

Алла—суха, çие—сăхман.
Эс тарçă иккенне кăтартăп.
Ӳтне кышлатăр шурă пыйтă,
Шăрка саралтăр çӳç çинче.

Тепри

Урпа акма вĕрент.

Асамат

Урпа-и?
Акатăн кăмака çинче.

*(Сасартăк Тутимĕр кĕрет, Асамат умне пырать).*

## IX

Тутимӗр

Мана нумай шыраран эсӗ.
Хам килтӗм сан патна, Галахов.

Сассем

Ха-ха!

Тутимӗр

Кушак пек мӑрлатса,
Ыран эсир шӑши ан пулӑр.

Пӗри

Вӑл Асамат пичче, Тутимӗр,
Вайпут тумтирӗ ун ҫинче.
Вайпут сӑхманлӑ, акӑ вӑл.

Тутимӗр

Анран куккук пек иртерех
Юрлатӑн, Асамат пичче.
Ҫаратнӑ чух малта чупатӑн,
Хӗҫ тытнӑ чух ялан кайра.
Мана паллатӑн-и, Галахов?

Галахов

Чемейӗн ывӑлӗ Тутимӗр.

Тутимӗр

Чӗлхесӗр турӑн аттене,
Анчах чӗлхелле ывӑлӗ.
Тӑпра ҫинче ҫӳрерӗн, ҫитӗ!
Паян ӑсанӑн пӗлӗте.
Сыв пул!

(*Пӑлхавҫӑссне*).

Ӑна—юпа ҫине!
(*Пӑлхавҫӑсем сӗтӗрсе илсе каяҫҫӗ*).

X

Тутимӗр

Мӗншӗн кая юлатӑн эсӗ?
Уттар!

Асамат

Халех пыратӑп эпӗ.

Тутимӗр

Ҫӑхан пек выҫӑ куҫлӑ эсӗ.
Ҫаратнӑ. Чӗлӗмӳ те ҫыннӑн.
Хул айӗнче епле арча?

Асамат

Ахаль.

Тутимӗр.

Ан суй, укҫа арчи.
Пуҫна кастарӑп, пытарсан.

Вăл санăн мар, вăл халăхăн.
Сана пуйма-и хирсенче
Тăкатпăр юн?

Асамат

Кăштах тăхта.
Пукан çинчи хура илем-ха.
Паян çименччĕ.

Тутимĕр

Чых, карланкă!

Асамат

Уксах уралла хамăн хур!
Хам пусрăм. Анкă-минкĕ арăм,
Шуйттанĕ, панă вайпута.

Тутимĕр

Хайлу та пур, выççу та пур.
Атя!

Асамат

Сан хыççăн эпĕ.

Тутимĕр

Пĕрре калапă.

(*Хĕç йĕннине кăтартса*).

Куртăн-и?

(*Иккĕшĕ те тухса каяççĕ*).

## XI

(*Чылай тăрсан, Полина ăна кĕрсе тайкаланса утать*).

Полина

Арчи те уçă. Лекнĕ мĕн.
Тĕп турĕ пăхăр чĕлĕмĕ.
Кĕрлет урса пăлханнă халăх.

(*Чӳрече патне пырать*).

Хăрушă... Ай... Юпа çинче...
Çилсем вĕреççĕ... Силленет...
Кăвар... Кăвар... Çунатăп эпĕ.

(Пĕренесенчен тытса хуллен йăванать. Чӳречесенчен палкаса тĕтĕм кĕрет).

ЧАРШАВ

## ТĂВАТТĂМĔШ АКТ

Асамат пӳрчĕ. Курак пĕччен ларать. Унăн умĕнче лакăм.

### I

Курак

Тутимĕр килчĕ те пуçланчĕ
Хăрушă юнлă самана.
Пуçа кассан та ăнланмастăп:
Кам айăплă? Кама мĕн кирлĕ?
Асаплă пурнăç пĕттĕр, теççĕ.
Анне те, эпĕ те ялан
Тертленнĕ, пирĕн ĕмĕр пулнă
Хура вăрман пекех хĕн-хурлă.
Кама вăрçас-ха? Турă хушнă.

(*Турчăкасем тата ытти тимĕр япаласем йăтса Эрпике кĕрет*).

### II

Эрпике

Сурса ылхантăн, алăк урлă
Нихçан ура пусма хушмарăн,
Çапах та килтĕм.

Курак

Хам ачамçăм,
Хам çулçăм хамăн хӳттĕме
Килет, кӳрет мана хаваслăх.
Пĕлетĕн манăн кăмăла:
Таканари шыв пек, ман çиллĕм
Пĕрре сикет те тăкăнать.
Ку йышлă тимĕр-тăмăр камăн?

Эрпике

Хĕçсем тума пухатăп эпĕ.

Курак

Ухвачĕсем нумай. Пĕрне
Киле хăвар-ха, Эрпике!

Эрпике

Мĕншĕн?

Курак

Икерчĕ пĕçерме.

Эрпике

Никам та çимĕ, вăхăт мар.
Васкатăп. Пирĕн турчăка
Паян хĕç пулмалла, анне.

(*Тĕпелтен турчăкана илет*).

Курак

Пěртен-пěр турчăка. Ăна
Илетěн-и?

Эрпике

Хушать Тутимěр.
Итлемесен—леш тěнчене!
Пур тимěр япала та хаклă,—
Хěç шăратаççě тимěрçсем.

Курак

Турчăкасем пуçтарасси
Хěр ěçě-и? Лар тěпелте!
Эс мар, киле патша килсен те,
Турчăкана памастăп эпě.

(*Ярса тытать*).

Эрпике

Сан турчăку хитре хěç пулě.
Хастарлă паттăр аллинче
Çуталě ялкăшса, кустарě
Çăмха пекех улпут пуçне.
Ан тив, анне, ан тыт,—илеймěн.

Курак

Туту çинчен сар сěт кайман,
Çапах та çын пуçне касма
Шутлатăн, ăстиçук ача!

Турчӑкапа пӗрре хӑмсарӑп,
Чӗлхесӗр юлӑн!

(*Турчӑкине туртса илме тӑрать*).

Эрпике

Туртӑшма
Санран пулать-и вӑл, анне.
Пӗрре ҫеҫ эх-хӗм ӳсӗрӗп,
Хӑранипе сар шӑлусем
Кашта ҫинчи чӑхсем пекех
Пӗр харӑс тӑкӑнӗҫ. Ан чар!
(*Турчӑкине туртса илет*).

Курак

Сана ҫуратнӑ кун ҫут ҫиҫӗм
Пӗрмай ҫиҫетчӗ пуҫ ҫинче,
Аҫа ҫапатчӗ, ҫӑмӑрччӗ.
Сана ҫапмарӗ ун чухне,
Шеллерӗ турӑ, Куракран
Чун мурӗ, ирсӗр хурчӑка
Ҫураласса пӗлмерӗ пулӗ.
Пӗлсен...

Эрпике

Мана аҫа ҫапатчӗ.
Йӗреттӗнччӗ. Вара мӗскер?

Курак

Тивлетсӗр самана асапӗ
Курман пулӑттӑм, шухӑш ҫукчӗ.

Пӗрчӗн-пӗрчӗн ӳкместчӗ ҫӳҫ,
Тура та ларайман ик ҫивӗт
Кӗтӳҫ пушши пек ҫинҫелместчӗ.
Тӗп туран аннӳне, пӗтертӗн.
Таҫтан, тӑпра шӑтӑкӗнчен
Тутимӗр килчӗ, явӑҫрӗ.

Эрпике

Каҫар, анне!

Курак

Эппин каҫарӑп,
Кунҫул кӗперӗ пулӑп саншӑн,
Ватсупнӑ хӑрӑк шӑммӑмсем
Кӗпер юпи. Каҫ, хӗрӗм, каҫ!
Каҫартӑм, Эрпике, ан ҫун.

Эрпике

Ытла та теветкел Тутимӗр,
Ҫемҫе чӗреллӗ те маттур.

Курак

Ҫемҫе?.. Каларӑн ҫуккине.
Тутимӗр хушнипе вайпут
Пӗтмерӗ-и? Ахрумкӑ пуп?

Эрпике

Тытса ан ҫак-ха вӗсене,
Хӑвар-ха чӗррӗн: ыранах
Ял вырӑнне кӗл ҫеҫ хӑварӗҫ.

Курак

Хăна пулма Тутимĕр килтĕр.
Пулать-и, çук-и сирĕн туйăр,
Кĕтсе сăра та сӳрĕлĕ.
Кала!

Эрпике

Качча тухман-ха эпĕ,
Пăртакçă кĕт, нӳхреп сăри
Хĕрсе пăсланмĕ пăр çинче.

Курак

Тутимĕрпе пĕрре калаçăп.
Йăва çинчи хур пек ларса
Ирттертĕм хамăн ĕмĕре,
Вăл урлă-пирлĕ тĕнчене
Курса çӳренисем çинчен
Пĕлтерĕ, ютшăнмĕ пиртен.
Пĕр-ик курка сăра тутанĕ.

Эрпике

Пĕлтерĕп. Пушансан, тен килĕ.
Хĕçсем туптанă вырăнта
Çӳретчĕ халĕ. Тимĕрçсем
Суха тĕренĕсĕр пуçне
Пĕртте пĕлмеççĕ. Вĕрентет.

Курак

Пĕлекеннисем кунта нумайччĕ,
Патша ăсатрĕ Çĕпĕре.
Пулать-и туйăр, Эрпике?

Эрпике

Пăлхав иртсен, телей килсен—
Урай силленĕ, кĕрлĕ туй.

Курак

Телейĕ тилĕ хӳринче.
Пăлхавăн ыра пархатарĕ
Çитессине шанмастăп эпĕ.
Ман ĕмĕрте пĕрре кăна-и
Пăлханнă халăх! Çĕнеймен.

Эрпике

Ку тапхăрта çĕнет. Тутимĕр
Ертме ăста. Чăн-чăн патша
Кăларнă вирлĕ мăнихвес,
Улпутсене çакма хăй хушнă.

Курак

Майра патша çăвар карать-и?
Нумай салтакĕ те пăшалĕ.
Пĕрре çапсан, Тутимĕр сисмĕ
Хăй çулçă пек сирпĕннине.

Эрпике

Тутимӗр-и? Юман кӗреш пек
Тӗреклӗ, хулӗсем кервен.

Курак

Хӑюллӑ, ӑслӑ, чип-чипер...
Илемлине пӑхмасть патша.
Пӗртте херхенмӗ пӑявне,
Ҫактарӗ—унӑн хӳхем ҫӳҫӗ
Арпашӗ сивӗ ҫил ҫинче.

Эрпике

Тутимӗр паттӑр та вӗри.

Курак

Ун пек вӗри чӑпар чӗреллӗ
Ҫынсем тӳсмеҫҫӗ ҫӗр ҫинче,
Е вилӗм, е телей шыраҫҫӗ.
Телейӗ ҫук. Ҫеҫен хирте
Курман-и эсӗ, лӗпешсем
Вӗҫеҫҫӗ тексӗм каҫсенче,
Шыраҫҫӗ ҫутӑ, ҫавӑнпа
Вучах ҫине кӗрсе ӗнеҫҫӗ.
Ҫаплах Тутимӗр.

Эрпике

Ан хӑрат!
Каяс-ха турчӑка пухма.

Курак

Ята ярса çӳре эппин.
Тутимĕр тилпĕрен çитернĕ,
Антратнă ухмаха, сана,—
Çавна кура сиксе çӳретĕн.
Асту, кайран пуçу ыратĕ,
Тăранте турчăка варçи,
Юн хăсăн, Эрпике ачам.
Хăвар,—ялта тата та тупăн,
Пит кирлĕ хамăр турчăка.

Эрпике

Епле-ха, хамăрăн юлсан,
Ыттисене илейĕп эпĕ...

(*Каять*).

III

Курак

Пĕччен чухне, эмел хăвачĕ
Сирĕличчен вĕрсе хурам-ха.
Тухатмăш йăлине пĕлместĕп,
Çапах та, туррăмăр хушсан,
Йĕркеллĕ пулĕ-ха, çырлахĕ.

Юлхав кушакăм пĕр шăши
Тытмарĕ, çаванпа паян
Анкартинче ларса ирттертĕм,
Яра кунах шăши сыхларăм,
Телейĕме кура сасартăк

Тĕл пулчĕ çамрăк çеç çура,—
Лектертĕм, çăмĕ çап-çăра.
Шăши çăмне ĕнтсе сапсан,
Çын хăвăрт сивĕнет, тесе
Калатчĕ ĕлек асанне.

(Хăйă çутса килет, ĕнтет,
хул айнс ухват тытса такмаклать.)

Çичĕ тинĕс леш енче
Йĕс тапраллă пĕр утрав,
Çав утравăн варринче
Йĕс вăрман ӳсет шултран.

Йĕс вăрманăн ăшĕнче
Çаврăнать пĕр йĕс пукан;
Çывăрать пукан çинче
Ылттăн çӳç—Ашапатман.

Сара шăлĕ, катăк шăл,
Кàрчăкан çăварĕнче.
Пĕр тĕкки пур,—пит кĕске,—
Вăл та пулин хыçĕнче.

Ылттăн çӳçлĕ карчăка
Эп калатăч кăмăлтан:
—Пулăш вара Курака!
Сиктĕр, сиктĕр йĕс пукан!

Сиктĕр, сиктĕр йĕс пукан!
Уйрăм пултăр ик чĕре.

Хĕрĕмрен Ашапатман
Сивĕттĕр Тутимĕре.

Эрпике ун умĕнче
Тухтăр питĕ тискере:
Майрака—çамки çинче,
Хыçĕнче—вăрăм хÿре,

Питĕнче—ÿпне çăпан,
Санĕ - хăрăм пек хура...
Пулăштăр Ашапатман,—
Йăлăнатăп эп, Курак.

Сиктĕр, сиктĕр йĕс пукан,
Кĕтĕр иккĕш хушшине,
Савăнса юратакан
Туйтăр хĕрĕн сиввине.

Манăн хĕрĕн куçхарши
Курантăр çĕлен пулса,
Савнă ик чĕре хушши
Татăр ĕмĕр пăрланса.

(*Вĕрет, сурать*).

Шăши çамĕ начар пулсан,—
Хăватла пул, вайпут эмелĕ!

(*Лакăма ярать*).

Тинех ăш канчĕ. Пулăш, турă!
(*Пилĕк салтак кĕреççĕ*).

IV

Пĕри

(*Саламатне силлесе*).

Ку мĕн-ха, вата кинемей!
Пĕлетни?

Курак

Саламат, таванăм.

Пĕри

Мĕскер таваççĕ унпала?

Курак

Хĕнеççĕ çынсене.

Тепри

Çапсассан,
Канать-и ÿт?

Курак

Кăвакарать.

Пĕри

Унтан мĕн?

Курак

Юн та пĕрхĕнет.

Пӗри

Ҫапсан, аван-и?

Курак

Тӗл пулман.

Пӗри

Кучченеҫе тутан эппин.
Ытла та лайӑх саламат,
Юппи те виҫҫӗ, кинемей.

(*Ҫурӑм урлӑ ҫапать*).

Пырать-и?

Курак

Ыратать, тӑванӑм.

Пӗри

Пире сӑра та чӑх какайӗ!
Астив тепре.

(*Ҫапать*).

Курак

Ан хӗнӗр, шеллӗр.
Ахаль те упӑшка патакӗ
Куллен лекет. Чӑххи ҫук манӑн.
Сӑри кӑшт пулӗ.

Тепри

Хăвăртрах!
Сап-çамрăк пăрчăкан хӳри пек
Вылянччĕр ватă урусем.

Виççĕмĕш

Пĕр куç анчах херĕх чăвашăн.
Куç витĕр-и?

Курак

Тур пулăшнипе
Куратăп.

Тăваттăмĕш

Пыл-сăра кунта!
Кайран калаçăн.

*(Курак чĕрес килсе лартать).*

Пиллĕкмĕш

Чăх какайĕ?

Курак

Чăххи çук.

Пĕри

Кӳршĕ-аршăн пур-тăр.
Сыхла та тыт—ăшалапăр.
Ку лакăмра мĕскер?

Курак

Каяшĕ.
Çĕпреллĕ.

Тепри

Ну, чее чăваш!
Тутли пулать вăл лакăмра.

Курак

Ăна кĕлтунă. Ырă мар.

Виççĕмĕш

Пире чăвашăн киремечĕ,
Тухатнă ăншăрчĕ тивмест.

Тăваттăмĕш

Пăлханнă-и эсир?

Курак

Ак турă,
Пĕрре те эпĕ пăлханман.
Пур халăх хытă тĕркĕшет,
Хĕçсем туптаççĕ.

Пĕри

Пилĕк чăх
Тытса кил халĕ кўршĕрен.
Калана! Марш! Ĕççе хĕрсен,
Чĕре вĕри, касма хăюллă.
Каймастăн-и?
(*Курака саламатпа çапать*).

Курак

Çапсан та çук. Вăрлас-и манăн?

(*Макăрать*).

Тепри

Туя тытса тĕлле тӳп-тӳрĕ,
Яра пар чăххăн уринчен.
Ахаль килсен—юпа çине.

(*Курак каять*).

V

Пĕри

Сыпар та çивĕччĕн пăхар.
Пăлханна халăх унсăрăн
Пире тытса пырша кăларĕ.

Тепри

Тавсъе! Ан тив, пуç сывă пултăр!
Тайма пуçа хĕçсем ан витчĕр.

(*Ĕçеççĕ*).

Виççĕмĕш

Сăра хăмлаллă, кăпăклă.
Чĕлхешĕн тутлă, пуçшăн йӳçĕ.

Тăваттăмĕш

Паян чăвашăн çимĕкĕ,
Алран кайми суха уявĕ,

Çапах та ӳсĕр çын курмарăм.
Ăçта вĕсем? Ырра-ши ку?

Пиллĕкмĕш

Галахов воевода çурчĕ
Çунать, тет. Çавăнта пулас.

Пĕрн

Ĕçер те, йĕнерсем çине!

Тепри

Камран хăрамалла? Чăвашăн
Пуртти те сенĕкĕ анчах.
Пăшал пĕрре çеç кĕрлесен,
Çатма çинчи пăрçа пекех
Саланĕç.

Виççĕмĕш

Салансан юратчĕ,—
Хĕç юнсăр, чун та тап-таса.
Сăхманлă мĕскĕн çынсене
Курсан, асрах çуралнă ялăм.
Иван пĕрре тăван килне
Кайса патша хĕçне вылятнă,
Хăй ашшĕне те шеллемен.
Çак куркана тӳнтер, Иван,
Хĕн-хурлă юрă пурччĕ санăн.

(*Иван ĕçет те юрлать*).

## Юрă

Асапран кĕпе çĕлерĕм,
Хурлăхран—ман аттăмсем.
Инкекрен—лаша йĕнерĕ,
Пусмартан—таканĕсем.

Патшаран илсе хаярлăх
Шăраттартăм хĕçĕме.
Ай, каçар, тăванăм, халăх,
Пылчăк витре чĕреме.

Сарлака хиртеччĕ утăм,
Кĕçенетчĕ ирхине.
Инкекрен çĕлерĕм, хутăм
Йĕнере лаша çине.

Манăн аттăм—манăн хурлăх,
Асапран—çири кĕпе.
Хир-хир урлă, ял-ял урлă
Карăм хурăн çулĕпе.

Хир-хир урлă, ял-ял урлă
Çитрĕм хамăн çĕрĕме.
Патша хушнă—эпĕ урнă,
Ай, суллатăп хĕçĕме.

Ман чĕре те, чун та пур та,
Ирĕк çук калла кайма.

Ман аттемҫӗм тытнӑ пуртӑ
Улпута ҫеҫ турама.

Ху тӑван ачу пулин те,
Эпӗ тивӗҫлӗ касма.
Ай, аттемҫӗм, йышӑн ӗнтӗ
Патша янӑ салама.

Макӑрса турарӑм хамӑн
Шур сухаллӑ аттене.
Куҫҫульпе те тасатаймӑп
Хура юнлӑ чӗрене.

П ӗ р и

Юрру чӑнах-и, тӗрӗс-и?

И в а н

Ак ҫакӑ ирсӗр аллӑмпа
Пӗтертӗм хамӑн аттене.

Т е п р и

Чуну ӑҫтаччӗ?

И в а н

Чӗререччӗ.
Атте пӗр пуртӑ йӑтнӑччӗ,
Ҫири тумтирӗ ҫӗтӗк-ҫатӑк,
Шӗвӗр сухалӗ кӑн-кавак.
Кун пек хӑрушӑ пурнӑҫа

Ан куртăр, терĕм те хĕçпе
Вакларăм.

Виççĕмĕш

Хытă чунлă эсĕ.

Иван

Чăвашсене ху касăн-и?

Виççĕмĕш

Касмасăр!.. Хамăрăн патшамăр
Хушсан, итлетĕп сăмахне.

Иван

Чăваш та ман атте пекех
Хресчен, çаплах асапĕ пысăк.
Патшамăр хушнине тума
Пăлханнă хамăн ялăма
Мана ярсан, хĕçпе каласрăм.

Пĕри

Чĕрес пушанчĕ.

Тепри

Лакăма
Уçас эппин.

(*Уçаççĕ*).

Виççĕмĕш

Чăваш чее.
Çĕпреллĕ-и? Чăн-чăн сăра.
Ытла та лайăх.

Тăваттăмĕш

Ĕрехмет!
Чĕлхе вĕçне хĕртет. Ку ырă!

Пиллĕкмĕш

Хĕç пек тивретрĕ чĕрене.
Чăваш тĕп турĕ. Наркăмăш!

Тепри

Вилетĕп, тăвансем...
(*Йăванать*).

Виççĕмĕш

Ай... ай...
Сĕтел те, пÿрт те çавранать.

Тăваттăмĕш

Хам виличчен пĕрне пулсан та,
Тиретĕп хĕç çине.

**(Хĕçне кăларса тăрса утать, алăк патĕнче чикеленсе каять.)**

Аах...

**(Пурте йăванса пĕтеççĕ. Чылай тăрсан, чăхсем йăтса Курак кĕрет.)**

## VI

### Курак

Нумай та ĕçеймен. Çапах
Йăлтах йăванна ӳсĕрсем.
Курак çав эпĕ! Ман сăра
Шерпетлĕ те ытла хăватлă.
Пуçран çапать те, урайне
Тĕреклĕ çын та йăкăлт çеç...
Вĕсемшĕн тарăхса кунта
Кӳрше кайса тăвата чăх
Вăрларăм, йывăр çылăх тупрăм.
Карта хыçне пытантăм та,
Туратлă вăрăм туяпа
Пĕрерĕн чăхсене шаккарăм,
Майĕсене пăра-пăра
Вĕлертĕм, халь те алă юнлă.
Пĕлес пулсан, ытла та намăс,
Мана вĕлерĕç хĕнесе.
Хĕртеççĕ ыйăха. Пĕрин те
Сăмси те шăхăрмасть. Вилмен-и?

(*Пĕрне тытса пăхать*).

Сип-сивĕ, пăр пекех. Ах, турă,
Шуйттан вайпучĕ наркăмăш
Тыттарнă ухмаха, мана.

(*Воевода тумтирĕпе Асамат кĕрет*).

## VII

Курак

Эп çылăхла, вайпут хăта.
Вилмен-и эсĕ, чĕрĕ-и?

Асамат

Мана вĕлерчĕç. Чунăм юлчĕ.
Масар çинчен тăрса юри
Эп килтĕм сан патна, инке.

Курак

Туятăп çав, сассу та урăх,
Ӳссе мăкланнă сухалу.
Кунта тăпра çинче вăрах-и
Çӳресшĕн, тепĕр хут калла
Масар çине каятăн-и?

Асамат

Çĕр айĕнче выртма кичем,
Çӳретĕп çĕр çинче, усаллăх,
Инкек-синкек, кĕсен-çăпан
Саратăп та, чăвашсене
Пĕрне те ырă хăвармастăп.

Курак

Пире ан тив.

А с а м а т

Сан упăшку
Пăлхавçă мар-и?

К у р а к

Ухмаха
Чаратăн-и? Ватсупнă йытă.

А с а м а т

Упăшкуна эппин чирлетĕп,
Вĕлерĕп кăçалах.

К у р а к

Ан çулăх,—
Усал пулсан та, пурăнтăр.

А с а м а т

Мана хур турĕ,—каçармастăп.
Вăл манăн тумтире хывса
Тумланчĕ хăй, мана çактарчĕ.

К у р а к

Мана та кулленех хĕнет.

А с а м а т

Мана эс патăн кучченеç:
Така пек пысăк çуллă хурччĕ...
Ана та илнĕ упăшку.

Курак

Йытран та ҫăтăрах карланкă.
Пĕрре ларсан—пĕр тирĕк пăтă
Лекмест те хырăмĕ тĕпне.

Асамат

Юхан-шăтанлă пӳрлĕ чир
Яратăп ун ҫине, инке!

Курак

Ан яр! Килте ҫын ҫук. Хам вată,—
Епле-ха пăхăп эп ăна!

Асамат

Сана хĕнет, мана вĕлерчĕ.
Тӳрех ăна масар ҫине
Туртатăп, ҫунтăр тамăкра.
Ку салтаксем ҫаплах выртаҫҫĕ.
Вилмен-и, чĕмере тытман-и,
Хăнтăрамак тавращĕ мар-и?

Курак

Мана Китай патши эмелĕ
Эс патăн сивĕтме тесе.
Тутимĕре валли чăмтартăм
Сăраллă лакăма. Сасартăк
Тĕл пулчĕҫ ҫакă салтаксем,
Саламатпа хĕне-хĕне

Хăпартрĕç сехрене. Кӳрше
Чăх вăрлама мана ярсан,
Тип-типĕ юлнă манăн лакăм,
Хăйсем пĕри те чĕрĕ мар.
Китай эмелĕ вырăнне
Мана эс наркăмăш паман-и?

Асамат

Тутимĕр вилтĕр, тенĕччĕ.
Патша салтакĕ—пилĕк чун
Вĕлерне эсĕ,—çылăхна
Арку айне хуратăн-и?
Упăшкупа пĕрле хăвна та
Чирлетĕп, тупăк хатĕрле!

Курак

Ах, турăçăм!.. Каçар, вăйпут,
Каçар... Пăртакçă пуранам.

Асамат

Салтаксене юри кăнтман.
Арман чул чухлĕ çылăхна
Пĕрех мăскалĕ юлмиччен
Илер те, упăшку çине
Куçарăпăр та, унăн чунĕ
Тертлентĕр ĕмĕр-ĕмĕрех.

Курак

Юрать эппин.

Асамат

Курак шуйттанĕ,
Ман вилĕме кĕтетĕн-и?
Вайпут çимере—акă хур!
(*Хурпа пуçĕнчен перет*).

Курак

Чăнах та эс-и, Асамат?
Куç витĕр мар.

Асамат

Куçу çĕкленĕ
Çамку çине. Ы-ых сана!
(*Урипе тапать*).

Курак

Вайпут тумтирĕ тăхăнсан,
Сана кам паллĕ? Ан хĕне!

Асамат

Пăлхав иртсен, салтак виллишĕн
Сана ăсатăп Çĕпĕре,
Çăпан пек кĕлеме çаптарăп.

Курак

Ху арăмна хăвах хĕрхен.
Яла хыпар сарăличчен
Ăçта пулсан та вăрттăнрах
Чикесчĕ вĕсене.

Асамат

Хама та,
Пуçран ачаш шăлса, каçармĕç.
Тĕпсакайне ярар-ха, карчăк.
Тыт уринчен.

Курак

Усал шăрши
Çитет, тет, çитмĕл çухрăма.

Асамат

Тĕттĕмленсен, карта хыçне
Чикетпĕр.

Курак

Çичĕ пăт та пур-тăр.

Асамат

Пăшаллă сăхăмсем. Патша
Епле çитерне вĕсене.

(*Пĕререн-пĕререн сĕтĕреççĕ*).

Курак

Вăйхал юлмарĕ.

Асамат

Ăш чикет.
Эрне хушши хулсем ыратĕç.
Сăра ăсса кил нÿхрепрен.

Курак

Ҫапла, пыр типрӗ, Асамат.

(*Чӗрес йăтса каять*).

## VIII

Асамат

Пăлхав пӗтсен, телей мехелӗ
Килетчӗ, ырă куйкăрăш
Вӗҫсе кӗретчӗ килӗме.
Ҫынсем ҫӗклеччĕр ҫивӗч пуртă,
Турчăкаран шăратчӗр хӗҫ,
Йăванччĕр юнлă хирсенче,
Чӗрисенчен шуйттан хупахӗ,
Ёмĕр-ёмĕр ҫеҫкесӗр курăк,
Шăтса хумхантăр ҫил ҫинче.
Мана мӗскер? Пăлхав пуйтарчӗ,
Вайпутăн пӗр арча укҫи
Паян ак манăн, Асаматăн,
Сăхманлă мăшăлти чăвашăн.
Пăлхав иртсен, кăтартăп эпӗ
Ҫара каска макланнине:
Улпут керменӗ пек мăн ҫурт
Ял варрине лартса мухтанăп,
Тӳшек ҫинче хăяккăн выртăп,
Килте вайпитлӗ ҫичӗ тарҫă
Ёҫленине ҫеҫ пăхăп эпӗ.
Хăнасенче илем кӳме

Татах та тепĕр хут авланăп,
Вунçиччĕри çап çамрăк арăм
Кăвак сухалăн мухтавне
Çĕклетĕ, юнашар тăрса
Вăл иртĕ халăх умĕнчен.

*(Чĕрес йăтса Курак кĕрет).*

## IX

Курак

Пасар пек халăх кĕр-кĕрлет,
Хăватлă аслати пекех.
Мĕн пулнă çав тери?

Асамат

Мĕн пултăр?
Улпутăн вăрманне касма
Каясшăн.

Курак

Эсĕ те унта
Кăн-кан пăхсан та, йĕрлесен
Юратчĕ. Пĕрене илсен,
Вите пекки лартаттăмăр.

Асамат

Хам укçапа хамах ларттарăп.
Улпутăн вăрманне касса,
Хам пуçăма кайран кастармăп.

Курак

Суя-ши ял сӑмахӗ? Эсӗ
Вайпут килне ухтарнӑ, тет.
Чылай укҫа та илнӗ, имӗш.

Асамат

Эп илмесен, тепри илетчӗ.
Ҫынсем ыйтсан, ҫавар ан кар.

Курак

Илтмен. Курман.

Асамат

Салтаксене
Вӗлернине те хытӑ тун.
Калаҫ анчах, ҫапса ӑсатӑп
Масар ҫине, анну патне.

Курак

Кӑвар ҫине ҫарран пуссан та,
Сӑмах кӑлармӑп, Асамат.

Асамат

Сана пӗр юрӑ: ҫук та ҫук!
Палхав иртсен, шаль тутӑр илӗп,
Хура сӑмсаллӑ Куракран
Чечен саркайӑк пулӑн эсӗ,
Пуян, телейлӗ йӑвара
Хушса ҫеҫ ларӑн, ҫичӗ тарҫӑ
Куян пек хӑлхине тӑратӗ.

Курак

Пӗрре те хамӑн ӗмӗрте
Çынна хушман—хамах танккана.
Пултарӑп-ши?

Асамат

Пыра-киле
Вӗренӗн, умӑнта ташлатӑн.
(*Тутимӗрпе Эрпике кӗреççӗ*).

X

Тутимӗр

Усал сӑмах—тула! Ӑшши—
Сире! Аван-и, ватӑсем?

Курак

Улма çулçи пек силленсе
Кӗтетпӗр хӑнана, Тутимӗр.

Тутимӗр

Курак инке—сип-симӗс çулçӑ,
Анчах та Асамат пичче,
Пӗр турата пуçу çине
Ӳкерӗп тенӗ ват юман пек,
Пӑхса ларать, сӑн-пичӗ сулхӑн.

Асамат

Пӗр чӗптӗм çиллӗм çук, Тутимӗр.
Паян шалт ыртӑм, ват шӑмшак
Сурать. Те çӑмӑра кӗтет?

Тутимӗр

Хулна хитре вайпут тумтирӗ
Туртса пусмасть-и, йывӑр мар-и?

Эрпике

Миталлӑ, ҫутӑ ҫӑлтӑрлӑ
Ан лар, атте, кӑлар та ывӑт!

Курак

Юмах патши кукша Иван пек
Сасартӑк манӑн Асамат
Килсе кӗрсен, хӑранипе
Шари! ҫеҫ ҫурӑлчӗ чӗре.

Асамат

Сиртен малтан ҫӑкӑр чӗлли
Ҫӗкленӗ эпӗ—ан вӗрентӗр!
Кӑкӑр ҫине ҫут ҫӑлтӑр мар,
Шапа ҫаксан та, ӗҫӗр ҫук.

Курак

Чӑкӑлтӑшлӑ та урлӑ-пирлӗ
Сӑмах ан ҫап, йӗркеллӗ пул.
Куян тискер сар кашкӑр тирӗ
Тупсан та тӑхӑнсан, ҫапах
Ӑна пӗрре те килӗшмест.
Сунар йытти пек харкашса
Ан хирӗҫ, кӑмӑлна яр уҫ.

Эрнике

Сăра сыпсан, усаллăх иртĕ.
Тавту, анне!

Курак

Тавсъе, Тутимĕр!
Телейлĕ пул. Çӳренĕ чух
Çĕрле çулна çутаттăр уйăх,
Тăр кăнтăрла хĕвел вăй патăр.
Аксан—тырру тип-тикĕс ӳстĕр,
Çĕлен шуса тухми çăра,
Турпас пек шултăра пуçахĕ,
Хăмăш пек хулăм хăмăлĕ.

(*Ĕçет, çăпалине тултарса Тутимĕре парать*).

Тутимĕр

Эс калани, Курак инке,
Ман чĕрене кĕнĕ пекех,
Тăпра ăшне кĕрсе чăн пултăр,
Тырра ăнса ӳсме калатăр.
Тĕппи курка çитес телейшĕн!

(*Ĕçет*).

Курак

Курка тип-типĕ, хамăрла!
Çурхи тӳпе пек кăмăлĕ
Тĕтресĕр, витĕр янкăр уçă.

Мĕскер ларатăн, Асамат,
Çăра пĕлĕт пек хуралса?

Эрпике

Капланнă çăмăр пĕлĕчĕ,
Пире аçа çапасшăн мар-и?

Асамат

Эп алăк хăлăпĕ-и сирĕн?
Килен-каян пурте мана
Хыпаласа пăхасшăн мĕн.

Курак

Ĕнерлĕ пул! Кăрчанкă пек
Ан вĕчĕлтет. Курка йăтса
Тутимĕре тав ту!

Асамат

Ман ирĕк!
Хĕре ахаль пама ухмах-и?
Мана малтан тӳлетĕр хулăм!

Тутимĕр

Çураçсанах—укçи умна.

Асамат

Çĕр тенкĕ хур сĕтел çине.

Тутимӗр

Пăхса ӳстернӗшӗн хисеп,
Ыр ӗмӗр, Асамат пичче.
Укҫа та хатӗр, кӗсъерех.
(*Сӗтел ҫине хурать*).

Асамат

Капла юрать. Сыв пул, Тутимӗр!
(*Ӗҫет*).

Тутимӗр

Вайпуг укҫин арчи санраччӗ.
Ăна пăлханнă халăха
Валеҫӗпӗр.

Асамат

Ман айăп пысăк.
Вайпут ҫуртне ҫунтарнă чух
Ытла та питӗ тӗркӗш пулчӗ.
Ют ял ҫынни, сухалсăрскер,
Кӗтмен ҫӗртен ура хурса
Мана сасартăк такăнтарчӗ,—
Хул хушшинчи арча ҫухалчӗ.

Тутимӗр

Ан суй! Сана юри йӗрлерӗм:
Лаша утлантăн та тӳрех
Яла кустартăн,—ҫăп-ҫăра
Тусан ҫӗкленчӗ ҫул ҫинче.
Ан хапсăн халăх укҫине!

Эрпике

Пуп куçĕ пек ху ĕмĕтне
Сӳнтер, атте!

Асамат

Эп сан аçу-и?

Эрпике

Атте.

Асамат

Шуралнă манăн çӳçĕм.
Санран ыйтмастăп. Хамăн ăс!

Тутимĕр

Ăсу çитет пулсан, ăнлан:
Ан сур эс халăх кӳллине.
Кăлар!

Асамат

Чăнах та çук, Тутимĕр.
Тáпра çыртса тупа тăватăп.

Тутимĕр

Çыртах!

Курак

Ту çӳллĕш ылттăн пар,
Анчах асту, ан сут чунна.
Укçу пирки мана каларăн.
Ан тун!

Асамат

Кар-кар хура Курак!
Шăммусене йытта парса
Асар-писерĕн кышлаттарăп.

Курак

Кышлат!—çапах та чун таса.

Асамат

Манра укçа! Манра, Тутимĕр!
Пытарнă çĕр айне, шыра!

Тутимĕр

Хулу çинчен пуçна вĕçтерĕп,—
Туптарăп халăх пурлăхне,
Çич чулăн айĕнчен кăларăн.

Асамат

Ӳпре çеç эсĕ. Савăнăн,
Нумай пулсан та, ик эрне.

Тутимĕр

Пăлхав чухне—таратăн эсĕ,
Вăрланă чух—малтан мала.

Асамат

Суратăп пăлхаву çине.
Укçа пулсан, телейлĕ эпĕ.

Тутимĕр

Салтаксене кĕтетĕн-и?
Пуççем сутса укçа пухасшăн.

(*Хĕçне кăларать*).

Пуçу-и хаклă е укçа?
Кĕрхи сар çулçă евĕр халăх
Кĕрешӳре йăваннă чух
Тăван килне—ху шăтăкна
Эс ылттăн мăйăрсем пухма
Шутлатăн-и, чăваш арланĕ?
Сана каларăм чĕлхепе,
Юлашкинчен хĕçпе калаçăп.

(*Эрпике хĕçĕнчен тытать*).

Эрпике

Ан кас, ан тив ăна, Тутимĕр...

Тутимĕр

Аçу-и ку? Çĕлен-калта!
Хĕçрен сыхларăн, Эрпике.
Анчах та, йывăрлăх килсен,
Сана вăл шеллĕ-ши, тăванăм?

(*Хĕçĕ çине таянса пуçне усать*).

ЧАРШАВ

## ПИЛЛЕКМĔШ АКТ

### Пĕрремĕш сыпăк

Çуннă ял. Кăмрăклă пĕренесем выртаççĕ. Малта хура юпа, анчах тăрри курăнмасть. Асаматпа Чемей кĕреççĕ.

I

Асамат

Сехмет сехечĕ çапрĕ-и,
Янрарĕ-и, Чемей пичче?
Пĕрре пăлханнăшăн патшамăр
Кастарчĕ вăрăм чĕлхÿне,
Ăна йытта парса çитерчĕ.
Хальхи пăлхавшăн, вată тусăм,
Пуçна касаççĕ пулĕ. Э?
Сан ывăлун, Тутимĕрĕн,
Лашин таканĕ айĕнче
Вут чулĕ каталса ванатчĕ,
Ак халĕ ĕнтĕ вăрманта
Куян пекех хăравçă таркăн.
Тутимĕр манăн ват пуçа
Илесшĕнччĕ,—тарса çÿрерĕм,
Тавата кун хĕлхем çакăр

Мана лекмерӗ, вӑрманта
Хура ҫӗрле эп выҫ ҫаварлӑ
Пӑхаттӑм шурӑ чӑкат пек
Пӗччен те тутлӑ уйӑха.
Ахаль пӗтет-и Асамат?
Юс пек чее те яп-яка.
Вилмерӗм, килтӗм хам яла,—
Ӑна вут пенӗ салтаксем.
Ҫилсем вӗреҫҫӗ. Кӗл вӗҫет.
Арча тулли укҫамӑм манӑн
Ҫӗр айӗнче ҫунман, телейӗм
Сиксе ташлать. Телейӗм сывӑ!
Кӗлленнӗ ҫӗр ҫинче ҫӗкленӗп эпӗ,
Пӑлханнӑ ҫынсене пытарнӑ
Масар ҫинче актарӑп тырӑ.
Тутимӗр чӗринчен шӑтса
Кашланӑ тулӑран кулачӑ
Пӗҫерӗп, куҫӗнчен хӑмла
Ӳстерӗп,—йӳҫӗ сӑрине
Ӗҫе-ӗҫе хаваслӑ ларӑп,
Мухтанӑп эпӗ, ял пуянӗ.
Ӑнлантӑн-и, Чемей пичче?

(*Хулӗнчен тытса силлет*).

Чемей пичче, ӑнман хӑта,
Чӗлхесӗр эсӗ, янавар!
Хура юпа, Чемей сехмечӗ,
Ларать те ним те шарламасть.
Каллех кунта хаяр пӑлхавшӑн

Патша ларттарĕ пĕр юпа.
Чемей пичче, чĕлхесĕр эсĕ,
Çапах хăрушă, шанчăксăр,
Аллусене апла-капла
Туса вăл-ку çинчен калаçăн,
Тутимĕр хăтăлса юлсан,
Пĕлтерĕн ĕмĕтĕм çинчен,
Сана пăвас килсе ман ală
Питех кĕçтет, Чемей пичче.

(*Чемее пусса выртать, пăвма тытăнать*).

Ан тапалан!

(*Курак кĕрет*).

### II

Курак

Ах, çылăх... Çылăх...
Паватăн мар-и хăтана?
Çӳлти аттемĕр, пӳлĕх турӑ,
Юнланнă ахăр самана
Хускалнине курать-ши, çук-ши?
Сана çĕр çăттăр, Асамат!

(*Уринчен сĕтĕрет*).

Асамат

Ан çыпçăн, аллăма ан лек!
Сана та парăп „апапап".

(*Тапать. Курак ӳкет*).

Курак

А-ах... Пĕтерчĕ кăкăра.
Чемей хăта та хăрлатать.
Чĕлхесĕр ватă мĕскĕне
Вĕлерниие сана мĕн усă?
Хăех вилетчĕ, Асамат!
(*Асамат тăрать*).

Асамат

Хăту тӳрех леш тĕнчене
Ăсанчĕ, ман çинчен элек
Калаймĕ тура умĕнче.
Чĕлхесĕр, янавар. Ха-ха!

Курак

Тем каласан та, ху чунна
Укçашăн сутнă эсреле,
Атăшнă, çавăнпа усаллăн
Урса çӳретĕн кăлахах.
Кĕлту, пуççап, йĕркеллĕ ӳкĕн.

Асамат

Эсрелĕ те, турри те маншăн
Иккех айкки те тăвайкки.
Çынсем çӳреччĕр анкă-минкĕ,
Калаçчĕр чунĕсем пирки,
Мана укçа арчи çĕклетĕ
Çӳлтен çӳле,—сентре çинчен
Суратăп çылăхсем çине!

Нумай çĕрсем куçа хупмасăр
Шутлаттăм эпĕ мул çинчен.
Кăвак хуппи пек ĕмĕтĕм
Кĕтмен çĕртен мана тĕл пулчĕ,—
Тин акă эпĕ ăнсăртран
Пулатăп хамăр ял пуянĕ,
Укçасенчен карта тытса,
Чăвашсене çаклатăп эпĕ.

### Курак

Çапла çав, пысăк эрешмен.
Санпа ирттертĕм ĕмĕре,
Анчах аллу пĕрре тӳп-тӳрĕ
Ĕçленине курмарăм эпĕ;
Хиртен ялан юри çĕрле
Килеттĕн, пĕр кĕлте пулсан та,
Илеттĕн эсĕ çыннăнне.
Ютран çеç мар, тăван килтен те
Вăрлас йăла пĕтмерĕ санăн,
Килте ху пĕр-пĕччен чухне
Чăх йăвинчен çăмартасем
Вăрттăн илсе, кушак пекех
Ĕçеттĕнччĕ, карланкуна
Чармарăн, çирĕн, чыхăнтăн,
Сар çу вăрлаттăн нӳхрепрен.

### Асамат

Хирти чĕтренкĕ шăрчăк пек
Илемсĕр купăс сăрлатма

Тăхтатăн-и, таса ухмахăм?
Итле-итле хăлха тарларĕ.
Туту çине çăра çакасчĕ,
Уççи манра пуласчĕ ун.
Вĕренсĕр ут пек сăмахна
Çăварăнтан ан яр пĕрре те,
Кайран калла хуса кӳртеймĕн.
Чĕлхесĕр Чемее пăвса
Вĕлерни не каламăн-и?

Курак

Тӳссе пулмасть. Укçа пирки,
Чемей хăта вилни çинчен те
Тĕрĕс-тĕкеллĕн, пытармасăр
Сăмах кăларăп ял çине.
Тараймăн халăх вĕччинчен.
Пĕр-пĕр çĕрле тӳр çын чукмарĕ
Сӳнтерĕ выçă ĕмĕтне.

Асамат

Апла эппин, сыв кай, Куракăм!
Чемей шăпи санран та иртмĕ.

Курак

Вĕлер!

Асамат

Ку яхăнта каçарăп.
Хĕн-хурлă чухăн пурăнса

Тертлентӗмӗр, юлашкинчен
Юр-варлӑ, муллӑ та тӗлейлӗ
Пулса курар-ха иксӗмӗр.

Курак

Çынна вӗлернӗ аллупа
Пуçтартӑн мул, çӑта карланкӑ!
Ӑна ан куртӑр манӑн куçӑм.
Вилсен—чун уçӑ, тап-таса.

Асамат

Леш тӗнчене пар лашапа
Шӑнкӑравсем çакса эп пырӑп.
Вара çӑтмахӑн алӑкне
Яр уç! Мана кӗтсе турамӑш
Пӗçертӗр хуплупа икерчӗ.

(Курака пӑвать, хускалмасӑр пӑхса тӑрать. Салтаксем кӗреççӗ).

III

Пӗри

Хисеплӗ господин, тавах!

(*Асамата чыс парать*).

Тепри

Кама чыс патӑн, апӑрша!
Тумтирӗ воеводӑн ун,
Хӑй вӑл чӑваш çынни, пӑлхавçӑ.

Курмастăн-и, ик уринче
Çапатисем, вĕсем те çĕтĕк.

Виççĕмĕш

Ури—чăвашăн, кăкăрĕ—
Улпутăн. Çалтăрлă! Ха-ха!

Тăваттăмĕш

Чăваш воеводне салам
Малтан калатăр саламат.

(*Тăваттăн-пиллĕкĕн хĕнеме тытăнаççĕ*).

Асамат

Тутимĕре сире тыттарăп,
Ăн-пуç çухаличчен ан çапăр.
Чим, тетĕп, чим!

Пĕри

Итлер!

Тепри

Кайран
Йĕмне хывса вĕтелĕпĕр.

Асамат

Пĕрре те эпĕ пăлханман.

Пĕри

Кун пек хитре хысна тумтирĕ
Ăçтан лектертĕн, йĕрĕнчĕк?

Асамат

Пăлхавшăн çичĕ ют тесе
Мана пуçа касма тăратчĕ
Эсрел пек утаман Тутимĕр.
Вара çĕрле çап-çарамас
Тарса пытантăм вăрмана,
Çире çӳхе кĕпе анчахчĕ.
Пĕрре шăнса ĕнтĕркесе
Кушак çури пек пулнă хыççăн,
Сехре хăпсан та, ăшăнма
Вут çуттине тĕлле-тĕлле
Аран-аран суллантăм эпĕ.
Вайпутăн çурчĕ çуннă мĕн.
Юпа çинче тумтирлĕ çын
Силленнине курсан, шеллерĕм,
Ăна антартăм çĕр çине:
Вилсен, мĕн тутăр тумтирпе?—
Тесе шутларĕ манăн пуçăм,—
Хывса илсе хам тăхăнтăм.
Шăнман пулсан, пĕлетĕр хăвăр,
Тивместĕмччĕ.

Пĕри

Суйма ăста.
Пĕр-иккĕ хытăрах вĕтсен,
Кăвар пек харăс ăшăнĕ
Чăваш ухмахĕн çурăмĕ.

(*Çапаççĕ. Офицер кĕрет*).

## IV

Асамат

Юп кур, ыр çыннăм офицер!

Офицер

Мĕскер?

Пĕри

Тутимĕре тытма
Илсе каясшăн çак чăваш.

Офицер

Тăнлас!

Асамат

Мана вайпут тумтирĕ,
Ак тура, лекрĕ инкекрен.

Офицер

Итлерĕм. Малалла кала!

Асамат

Чĕрем çунать патша йĕркишĕн.
Тутимĕр ашшĕне хамах
Шаккарăм, ку хĕрарăма
Наркăмăшлă сăра парса
Салтаксене вĕлернĕшĕн
Пăвса пăрахрам, тўсеймерĕм.

Патшамăрăн усал тăшманĕ,
Пăлхавла утаман Тутимĕр
Çухалтăр çĕр çинчен,—сире
Халех ертсе каятăп эпĕ.

Офицер

Инçе-и?

Асамат

Сĕм вăрман варри.
Ахрат çырми! Упалăх варĕ.
Унта кайма сукмак та çук,
Этем йĕррисер чăтлăх вырăн.
Эсир çеç хăвăр тĕпчесен,
Аташăр.

Офицер

Салтаксем, рете!
Лере, мала тăр, çул кăтарт!

Асамат

Авал сунарçă пулнă эпĕ,
Сĕм-сĕм вăрман, çăра пулсан та,
Пӳрне пек паллă.

(*Салтаксен умне тăрать*).

Офицер

Команда, марш! Хăвасла юрă!
(*Салтаксем юрласа утаççĕ*).

## Юр ă

Ахалех пăлхантăн, халăх.
Юнлă пулчĕ хирĕмĕр.
Пуçсене сулса касмалăх
Çивĕч пирĕн хĕçĕмĕр.

Хир çинче хаваслă явăн,
Куçсене сăха-сăха
Апатлан та, ирĕк ярăн,
Кăранклат, хура çăхан!

Мĕскĕн хĕр, ӳстертĕн кантăр
Пир çинче тĕрĕ тума.
Пăявсем унтан яватпăр
Савнă каччăна çакма.

Ан хурланăр, ан эрленĕр,
Чип-чипер хитре хĕрсем!
Сирĕн çумăра иленĕç
Йĕс таканлă салтаксем.

Акăш пек хĕрсем, шыв парăр
Çӳлĕ валак пуçĕнчен,
Пирĕн алсене тасатăр
Каччăрсен юнĕсенчен.

ЧАРШАВ

## Иккӗмӗш сыпӑк

Ҫӑра та тӗксӗм вӑрман.
Пӑлхавҫӑсем вучах умӗнче ларассӗ.

I

Пӗри

Ӑҫта каяр-ши, тӑвансем?
Кӗрхи ҫанталӑк ҫитиччен
Хура вӑрман пире пытарӗ.
Кайран?..

Тепри

Эс ҫамрӑк та вӑйпитлӗ.
Ӑҫта кайсан та—вырӑн пур,
Ача-пӑчамҫӑм саккӑрӑн,
Сӑпка ҫинче тепри, пепекӗм!
Сӗм суккӑр карчӑк. Самана
Сакки ҫинчен пире антарчӗ.

Виҫҫӗмӗш

Пӑлхав кӗрлерӗ те, телейӗ
Ҫумарӗ пирӗн пуҫ ҫине.
Миҫе хутчен салтаксене
Салатрӑмӑр, юлашкинчен

Майра патша юри хăй янă
Пин çынлă пысăк утлă çар
Пире тапта-тапта турарĕ,
Ут çулнă пек йăванчĕ халăх.

Тăваттăмĕш

Турчăкаран шăратнă хĕç,
Çава та пуртă пулчĕ пирĕн,
Çапах кĕрешрĕмĕр пит вирлĕ.
Ик уйăх çака таврара
Хаваслăхчĕ, хуçаччĕ хамăр.
Кăкларăмăр улпутсене:
Алла лекни—юпа çинче,
Сахаллĕш тарнă, хăтăлнă.

Пиллĕкмĕш

Улпут пĕтет-и çĕр çинче?
Пĕри вилсен, тепри сып-сывă.
Каллех кунта хăпса килеççĕ.
Пăлхантăмăр, ак халĕ тӳс,
Ташла вĕри çатма çинче.
Е вилĕм, е çамка çине
Пустарĕç тимĕр кĕлеме.

Улттăмĕш

Пĕрре те ӳкĕнместĕп эпĕ.
Мăнтарăн хамăн ĕмĕрте
Пĕрре пулсан та питĕ хытă
Тылларăмăр улпутсене,

Пĕрне ак çакă аллăмпа
Çакса вĕлертĕм, кăмăл тулчĕ.
Хама тытсан, пĕр хĕнемесĕр,
Ал-урана ватмасăр, тӳрĕ
Пĕрре персе çеç вĕлерсен,
Аванччĕ, тĕрлĕ куракксем
Тата йĕлме хуппи çисе
Пăхмастăм выçлăх кусĕнчен.

## Çиччĕмĕш

Мăян çисен те хам килтеччĕ,
Тутимĕр айăплă кунта.
Пăлхав çĕклемесен, сăлтавсăр
Çунмастчĕ ял.

## Саккăрмĕш

Ан вăрç ăна!
Пурте эпир Тутимĕр пек
Хастарлă тытăнсан, пăлхавăн
Тĕшши юлатчĕ çĕр çинче.
Чи юлашки çапăçура
Пăхатăп: йышлă юланут
Килет, мăкăрланать тусан.
Сехрем юлмарĕ, тартăм эпĕ,
Юман çине кушак пекех
Хăпартăм, çулçă хушшинчен
Пăхса ларатăп, тинкерсе.
Сасартăк пĕрхĕнсе Тутимĕр
Тухать те, хум пекех лаши

Хирте тип-тикĕс яранать,
Чупни, юртни те сисĕнмест,
Хăватлă кăйкăр кайăк пек
Мала кăшт ўпеннĕ Тутимĕр.
Шап-шурă утлă ахвитсер
Салтаксенчен малта пыратчĕ,
Хăяккăн тытнă хĕçĕ унăн
Çунатчĕ ялкăшса.
                    Тутимĕр
Сасартăк пўлчĕ ун çулне.
Хĕçне сулса пĕрре ярсассăн,
Йăванчĕ чаплă ахвитсер.
Пĕр ушкăн юланут салтак
Лашисене чĕвен тытса
Шак сиккипе вĕçсе пырсассăн,
Çут çиçĕм пек хĕçне Тутимĕр
Сулмаклăн сулласа пуçларĕ
Касма, касма... сахал тесен те,
Тĕп пулчĕ вун салтак унта.
Кĕтмен çĕртен аманнă учĕ
Йăванчĕ, унăн пуçĕ урлă
Çăмха пек сирпĕнчĕ Тутимĕр.
Çухалчĕ ĕнтĕ, терĕм эпĕ,
Анчах сиксе тăрса хĕçне
Ямарĕ аллинчен, каллех
Тапратрĕ хытă турама,
Унтан пĕр салтака сасартăк
Йĕнер çинчен туртса антарчĕ,
Утне утланчĕ, хăталчĕ.

Кайран пӑлхав саланнӑ хыҫҫӑн
Тӑпра ҫинче пӗччен чӗнмесӗр
Выртсан-выртсан, ача пекех
Йӗрме пуҫларӗ.

Т ӑ х х ӑ р м ӗ ш

Паттӑр вӑл.
Асап курса исленнӗ халӑх
Телейӗ кӗлленсе вӗҫнишӗн
Чунне татса йӗрет Тутимӗр.

В у н н ӑ м ӗ ш

Йӗрет, ҫапах вӗри куҫҫулӗ
Пире хӗртмест.

В у н п ӗ р м ӗ ш

Кӗрхи ҫанталӑк
Тӗтреллӗ куҫӗпе пӑхсан,
Эпир ӑҫта каятпӑр-ши?

В у н и к к ӗ м ӗ ш

Чӗре кӑварӗ сӳнтӗр-ха.
Шыв выранне пур пирӗн юрӑ.

*(Юрлама тытӑнать, миттисем хутшӑнаҫҫӗ).*

Ю р ӑ

Тӑван ҫӗршыв, ҫӗршывӑм, эсӗ,
Анне пулсан та, пит хаяр.
Пире ҫуратрӑн шеллемесӗр.
Чӗре ҫунать: унта—кӑвар.

Кĕр çитĕ те, кикак хуркайăк
Ăсанĕ ăша кăнтăра.
Йăви услап упан та лайăх,
Шăтăк пур сăра кашкăрăн.

Хĕлле валли пур тиллĕн тирĕ,
Ăсанăн—сарлака çунат.
Ним те, ним те юлмарĕ пирĕн.
Ăшра кăвар. Чĕре çунать.

Тăван çĕршыв улпутшăн уçă,
Пире усал çĕршывăмăр.
Пиртен тăвасчĕ сарă çулçă,
Керхи çилпе каяттăмăр.

Пире çеç выран çук. Хуркайăк
Ăсанĕ ăшă кăнтăра.
Йăви услап упан та лайăх,
Шăтăк пур сăрă кашкăрăн.

(*Тутимĕрпе Эрпике кĕреççĕ*).

## II

### Тутимĕр

Кĕрхи пиçен çеçки çинче
Тĕкĕлтура йĕрни пекех
Илемсĕр, шанчăксăр ку юрă.

(*Йывăç çумне таянса*).

Пăртак пулин те ĕмĕте
Йăтаканни, тепри пур манăн.

(Юрлама пуçлать. Малтан Эрпике, каярах
ыттисем те хутшăнаççĕ).

Юрă

Уй-хирте вăрă-хурахăн
Хураласçĕ çăхансем.
Хурчăкамăр ырнă ахăр,
Усăннă çуначĕсем.

Ыратать йавăр суранĕ,
Сăрхăнать хĕп-хĕрлĕ юн.
Пирĕн хурчăкамăр канĕ,
Вăй-хăвачĕ ӳсĕ ун.

Тепĕр хут вĕçсе хăпарĕ
Кăн-кăвак пĕлĕт патне,
Вăркăнса анса тустарĕ
Хуп-хура çăхансене.

Чĕрнине тăсса вăл анĕ
Пĕтерме тăшмансене.
Хурчăкамăр халĕ канĕ,
Пухĕ пысăк вăй-халне.

Пирĕн савнă хурчăкамăр
Çĕнĕрен пĕр çĕкленсен,

Вилĕç халĕ, вилĕç самăр
Тĕксĕм хура çăхансем.

П ĕ р и

Юрру чипер, яка, Тутимĕр!
Анчах çулсем тумхахлă пирĕн,
Ăçта кайсан та—сулăнкă.

Т у т и м ĕ р

Çатма пекех тап-такăр пулĕ.

Т е п р и

Çулçисене хырсем тăксан-и?

Т у т и м ĕ р

Хыр çулçисем ем-ешĕл ларĕç.
Хăçан пулсан та, самана
Пĕрре çĕкленĕ пирĕн май.
Пире таптарĕç салтаксем.
Кунта çанталăк халĕ лăпкă,
Эпир юн тăкнă çĕр çинче
Чĕркуç таран çĕкленчĕ курăк.
Анчах йĕри-тавра пăлхав,
Хĕççем янраççĕ, юланут
Сикет те, çăп-çăра тусанĕ
Мăкăрланать çулсем çинче.

В и ç ç ĕ м ĕ ш

Ăçта патшамăр Пăкачав?

Тутимĕр

Вăл Аслă Атăл таврашне
Çул тытнă, çавăнта кăварĕ
Хĕртет паян улпутсене,
Мускав хули çине кĕресшĕн:
Хăлат пекех вĕçет ялавĕ.

Тăваттăмĕш

Ăна—Мускав, хур тĕк минтерĕ.
Пире—măйран пăяв йăлмакĕ,
Айран—шалçа.

Тутимĕр

Чуралăх самани çĕленĕ
Чăнах та вилтĕрччĕ—тесен,
Пуçне касмасăр ĕç тухмасть.
Ун пуçĕ Мускавра. Ăна
Касса ура айне хурасшăн
Васканă ăслă Пăкачав.

Пиллĕкмĕш

Ăна кĕтсе хĕлле шартлатĕ,
Салтак пăшалĕ тивмесен,—
Тăманлă юр пире пĕтерĕ,
Витсе хăварĕ; çуркунне
Мăнтарăн пирĕн ӳтсене
Выçса алхаснă кашкăрсем
Çыртса турткалĕç.

Тутимĕр

Çут тĕнче
Яр уçă, сарлака, хапхасăр.
Чăнах та ирĕк пулмасан,
Тăван тăпра çинчен куçса
Каятпăр пушкăртсем патне.
Хул авăнтăр, тата ик ала
Тарлатăр çеç—хăравçă вилĕм
Ĕнсе çине килсе лараймĕ.

Ултăмĕш

Тăван хиртен каймастăп эпĕ.
Вилсен те, тунката пекех
Ларатăп асатте пилленĕ,
Суха тыттарнă çĕр çинче.

Тутимĕр

Асаттесем пăлханнă хыççăн
Хăйсем те Атăл леш енчен
Кунта куçса авал ларман-и?

Çиччĕмĕш

Тăван çĕртен куçассине,
Ку инкеке пĕлес пулсассăн,
Мĕншĕн пăлхатрăн халăха,
Хĕçсем тыттартăн эс, Тутимĕр?

Тутимĕр

Кунта пĕтсен те, таврара
Сиксе шавлать пăлхав хăвачĕ,

Илемлĕ пушкăрт хирĕнче
Халь Салаватăн урхамахĕ
Юртать, пĕрре те таканмасть.
Пăлхав кунта юнпа путнишĕн
Сирте те пысăк айăп пур.
Эсир малтан ытла хĕрӳччĕ,
Анчах улпутсене çакса
Çĕрне тăпăлтарса илсен,
Пăрахрăр хĕçсене, хире
Васкав кăлартăр сухапуçĕ,
Салтаксене курсан, пĕрерĕн
Тарса пытантăр вăрмана.

Саккăрмĕш

Ялан хĕç-сăнă вылятсан,
Çаран утти пек пуçсене
Касса тăксан, ачасене
Кам пулĕ çăкăр параканĕ?

Тăххăрмĕш

Хресчен патши килет тесен,
Сана шанса çĕклентĕмĕр.
Пире пĕтертĕн эс, Тутимĕр!

Тутимĕр

Суймарăм эпĕ, пушкăртран,
Пăлханнă халăх хушшинчен
Патша манифестне илсе
Юри васкарăм ялăма.

Вуннăмĕш

Пăлхав ăнмарĕ çав, Тутимĕр.
Сана мĕскер! Çунатлă кайăк,
Ăçта кайсан та, пуранма
Çăп-çăмăл та питех ансат.
Ача-пăчамçăм саккăран,
Пĕри сăпка çинче сикет,
Çапах карланкă. Арăм суккăр.
Ăçта тарса кайсан та—выçлăх:
Çухатмĕ манăн сукмака.
Пăлхав çĕклетрĕн. Салтаксем
Кĕлпе вĕçтерчĕç ман çурта.
Сана ак çак инкек-синкекшĕн
Чиксе пăрахăттăм, Тутимĕр.

Тутимĕр

Мана чиксен, Тяпук пичче,
Чĕрŷ канать-и?

Тяпук

Тен ун чух
Сана вĕлернĕшĕн пире
Патша кăларĕ çăмăллăх.

Тутимĕр

Эппин вĕлер, ман юн çинче
Чарлан пек вĕçĕ çăмăллăх.

Пĕр сасă

Çыхас ăна!

Тепĕр сасă

Пире те уншăн
Патша хăварĕ çĕр çинче.

Эрпике

Çынна сутса пайта илесшĕн?
Тутимĕрпе мана вĕлерĕр,
Ӳте сутсан та, чунсене
Ан парăр!

Пĕр сасă

Тăвансем, çыхар!

Тутимĕр

Мана сутсан та, каçару
Илессине пĕртте ан шанăр.
Сана укçа-и тĕнчере
Хакли? Кала, Тяпук пичче!

Тяпук

Укçа пулсан, хаваслă эпĕ,
Ача-пăча та, хам та тутă.

Тутимĕр

Ыттисене мĕскер?

Сасăсем

Çиме!

Тутимĕр

Улпутсене çаратнă чух
Сире валли пухса хам пытăм.
Тăшманăрсен укçисене
Сире пĕр пек тĕрĕс-тĕкеллĕн
Паратăп валеçсе.

(*Кашнинех валеçме тытăнать*).

Пĕри

Тутимĕр,
Мана каçар усал сăмахшĕн.

Тутимĕр

Мĕнле сăмах?

Пĕри

Сана çыхма
Чĕнекенни вăл—эпĕччĕ.

Тутимĕр

Мана çыхас текеннисем
Нумай та, эпĕ—пĕр-пĕччен.

Тепри

Ак çакă тĕнчере пурте
Сан пек пулсан, э-эх, Тутимĕр!

Т у т и м ĕ р

Ачу-пăчу нумай, ху ватă,
Çавна кура, Тяпук пичче,
Укçи те ытларах сана.

Т я п у к

Тутимĕр, ан кӳрен тархасшăн.
Сана чикес тесе каларăм.
Ухмах çав эпĕ,—ватă пуç.

(*Макăрать*).

Т у т и м ĕ р

Ачу-пăчушăн ан хурлан.
Эхер те Пушкăрта кайсан,
Хамах тăрантăп вĕсене.

Э р п и к е

Кĕписене çĕлетĕп эпĕ.

Т у т и м ĕ р

Пурте укçаллă, сапăр пулăр.
Пĕр-пĕринне ан хапсăнăр.
Вăрлакана суд тăвĕ хĕç.

С а с ă с е м

Вăрламăпăр.

Тутимĕр

Пуян тесе ан лартăр пуртă
Ман майĕ çине. Пĕр пус та çук.
Йăлтах сирте.

Пĕр сасă

Тутимĕрсĕр
Вилетпĕр хăмăр.

Тепĕр сасă

Ылттăн çын,
Тутимĕр—пирĕншĕн чĕре.

Тяпук

Тутимĕр хыççăн кăвара
Кĕме, шыва путма та хатĕр.
Пурте вĕçетпĕр Пушкăрта.

Сасăсем

Каятпăр.

Тяпук

Сан юрру, Тутимĕр,
Аванччĕ.

Тутимĕр

Эрпике, пуçла!

Эрпике хыççăн пурте харăсах юрлама тытăнаççĕ.

Уй-хирте вăрă-хурахăн
Хуралаççĕ çăхансем.
Хурчăкамăр ырнă ахăр,
Усăннă çуначĕсем.

(Пăшал сассисем. Тутимĕр йăванать. Салтаксем курăнаççĕ).

III

Тяпук

Мĕскер тăратпăр, тăвансем?
Вилер Тутимĕрпе пĕрле.

Сасăсем

Мала!..

(*Хĕçсем сулласа чупаççĕ*).

Эрпике

Тăратăн-ши, Тутимĕр!

Тутимĕр

Вилетĕп, Эрпике...

(*Асамат кĕрет*).

IV

Эрпике

Атте...

Асамат

Пăлхавçă таркăн хĕрĕме
Салам. Çĕнтертĕр-и? Ха-ха!

(*Каçса кайса кулать*).

Эрпике

Арча укçа сана çитмерĕ.
Пире те сутрăн-и, аттеçĕм?
Ман мулăм çук, çапах та эпĕ
Сана парне паратăп. Ме!

(Эрпике Тутимĕрĕн хĕçне илет те сулать. Асамат ӳкет. Салтаксем хупăрлаççĕ).

ЧАРШАВ

Редактр СТИХВАН ШАВЛЫ

НТ 3510
Тираж 3000 экз.
Формат бумаги 60×92[1]/32
Подписано к печати 24/V 1941 г.
Объем 5 печ. л.
Заказ № 1292

Типография № 2 Управления
Издательств и Полиграфии при
СНК ЧАССР, г. Алатырь.

Цена 3 р. 50 к.

ЯКОВ УХСАЙ

# ТУДИМЕР

На чувашском языке

ГОСИЗДАТ ЧАССР
1941